# ХЫПАР

ШĂМАТКУН

2014, декабрь / раштав 13

237-238 /26643-26644/ №№ Хакĕ ирĕклĕ www.hypar.ru



*Хамăрăн тĕп пуянлăха – чĕлхемĕре – упрассишĕн* 5

*Çĕр чăнах та çаврака иккен, е...* 9

*Ан хăра, ку театр çеç...* 13




# «Чĕкеç» чĕвĕлти «чĕпписене» йышăнчĕ

***Республикăра шкул ÿсĕмне çитмен ачасем валли вĕренÿ учрежденийĕсем уçас тĕлĕшпе юлашки виçĕ çулта ырă улшăну сахал мар пулса иртрĕ.***

Садик черетне кĕскетес тĕллевпе федераци хыснинчен, республикăн е вырăнти хăйтытăмлăх енчĕкĕнчен нухрат чылай уйăрнин кăтартăвĕ – кивĕ çуртсене тĕпрен юсаса ача сачĕсем хута яни, тахçантанпах ĕçлекеннисенче çĕнĕ вырăнсем йĕркелени тата, паллах, çĕнĕ садиксем туни. Кăçал Чăваш Енре ача сачĕсем 15 уçма палăртнă. Çулталăк вĕçленсе пынă май пуçăннă объектсенче строительсем юлашки ĕçсене пурнăçлаççĕ. Вăрмарсен, Йĕпреçсен ĕмĕчĕ çак кунсенче пурнăçланчĕ. Декабрĕн 11-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкарти Юраково районĕнче те çĕнĕ, виçĕ хутлă, чăвашла хитре ятлă «Чĕкеç» садик хута кайнине савăнăçлăн уявларĕç.

Интернационалист салтаксен урамĕнче шкул ÿсĕмне çитменнисен учрежденийĕ кирли пирки вырăнти влаç органĕсен иккĕленÿ пулман: хула транспорчĕ çÿрекен çулран аякра пурăнакансен ача-пăчана инçете илсе çÿреме тивнĕ. Çакна шута илсе 2013 çулхи сентябрьте кунта садикăн никĕсне янă.

Çĕнĕ Шупашкарăн пулас ăрăвне тин çеç тараватлă йышăннă «Чĕкеç» ыттисенчен уйрăмрах садик. Çÿллĕ те капмар пулнипе анчах та мар: вăл Митта Васлейĕ ячĕллĕ 20-мĕш шкулăн тытăмне кĕрет. Кунта уйрăм предметсене тарăннăн вĕрентеççĕ, çавăнпа садике çÿрекен ачасене шкула кайма тĕплĕнрех хатĕрлеме пулать.

● ➡ *2 стр.*

**«Хыпар» Издательство çурчĕн пур кăларăмне те 2015 çулăн пĕрремĕш çурçуллăхĕ валли *йÿнĕрех хакпа декабрĕн 15-мĕшĕччен çеç çырăнтараççĕ.* Çырăнма васкăр!**

| Кăларăмсем | Индекс | 2015 çулăн пĕрремĕш çуррине илсе тăма çырăнтаракан хаçат-журнал хакĕсем | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче. Раштавăн 5-15-мĕшĕсенче | Почта уйрăмĕсенче. Декада хыççăн | Почта уйрăмĕсенче. Декада вăхăтĕнчи экономи | «Чăваш пичечĕ» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | ВД800 | 645 | 732,66 | -87,66 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | В8353 | 264,66 | 304,08 | -39,42 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | ВД804 | 307,86 | 358,08 | -50,22 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | В1515 | 278,46 | 325,08 | -46,62 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | В1524 | 176,46 | 205,02 | -28,56 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | В4806 | 176,46 | 184,04 | -7,58 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | В4838 | 327,54 | 376,62 | -49,08 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | В3887 | 176,46 | 184,08 | -7,62 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | В1529 | 267,36 | 319,08 | -51,72 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | В4608 | 155,7 | 185,04 | -29,34 | 150 | 126 | 108 |
| ЛИК | В3429 | 116,32 | 140,36 | -24,04 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | В4807 | 253,86 | 298,08 | -44,22 | 192 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства ЧР | В4847 | 612,24 | 743,58 | -131,34 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | В4802 | 237,66 | 274,08 | -36,42 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | В3208 | 150,9 | 181,02 | -30,12 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | В3771 | 120,18 | 143,52 | -23,34 | 114 | 111 | 90 |

# «Чӗкеҫ» чӗвӗлти «чӗpписене» йышӑнчӗ

/Вӗҫӗ. Пуҫламӑшӗ 1-мӗш стр./

– Шкулӑн пурлӑх никӗсӗ аванах пуян. Ҫавна май садикри ачасем пуҫламӑш классенче вӗренекенсемпе пӗрлехи занятисенче те пулӗҫ. Тренажерсем вырнаҫтарнӑ зал е бассейн – вӗсене те шӑпӑрлансем хаваспах ҫӳреме пултараҫҫӗ. Ҫапла майпа ачасем шкула майӗпен хӑнӑхса пырӗҫ, парта хушшине ларма вӑхӑт ҫитнӗ тӗле вӗрентекенсене те паллама тытӑнӗҫ, – тет Александр Матвеев директор.

Тин кӑна хута кайнӑ садик хӑй те ҫитӗнекен ӑрӑва тӗрлӗ енлӗн аталантарма самай меллӗ: музыка, спортпа гимнастика залӗсем, логопед, медицина пӳлӗмӗсем, хӑтлӑ стадион пур. Апат-ҫимӗҫ хатӗрлекен блокра – вӑл темиҫе пӳлӗмрен тӑрать – хальхи вӑхӑтри чи чаплӑ оборудовани. Сывах мар ачасене ҫӑмӑллӑх кӳрессине те шута илнӗ кунта – кӗнӗ ҫӗрте пандус вырнаҫтарнӑ.

Малтанхи проектпа садик 180 ачана йышӑнма палӑртнӑ пулнӑ. СанПИНа улшӑнусем кӗртнӗ майӑн ку йыша 260 ачана ҫитернӗ. Ҫакӑ, паллах, Ҫӗнӗ Шупашкарсен садик черетне палӑрмаллах кӗскетет. Халӗ хулари икӗ ҫултан иртнисем шкулчченхи пӗлӳ учрежденийӗсене пурте тенӗ пек ҫӳреҫҫӗ. Ҫакна палӑртса хӑварчӗ те савӑнӑҫлӑ уява пухӑннӑ ҫынсен умӗнче Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев. Тепӗр садик уҫсан вара кунашкал ыйтупа йӗркеленнӗ черет вуҫех пулмасса ҫирӗплетрӗ.

– Эсир вара ача татах ҫуратма хатӗр-и? – демографи ларутӑрӑвне лайӑхлатасси ҫинчен сӑмах пуҫарас вырӑнне шахвӑртса ыйтрӗ Михаил Васильевич ҫамрӑкрах ашшӗ-амӑшӗнчен.

Чылайӑшӗ тӳррӗн хуравличчен йӑл кулчӗ пулин те влаҫрисем ҫакна шанчӑк пур пек йышӑнчӗҫ.

Паллӑ ӳнерҫӗ Праски Витти ӳкерчӗкӗпе илемлетнӗ «Чӗкеҫ» садик чӗвӗлти чӗпписене йышӑнчӗ. Чунтан кӗтнӗ кун ҫитнӗ чух ашшӗ-амӑшӗн пичӗ ҫинче савӑнӑҫсӑр пуҫне мӗн пултӑр ӗнтӗ? Акӑ 5 ҫулти Алексей Чернован асламӑшӗ те питӗ хытӑ савӑннӑ – Полина Егоровна Чернова республика ертӳлӗхне тав туса пӗтерейместь. Ҫулланнӑ хӗрарӑм воспитательсене конкурспа ӗҫе илнӗшӗн те хӗпӗртет, вӗсем ачасене ырра кӑна хӑнӑхтарасса шанать.

«СоюзСтройинвест» компани шартлама сивӗре те, чӑтма ҫук шӑрӑхра та тӑрӑшни сая ан кайтӑрччӗ эппин. Пулас ӑру валли хывнӑ инвестици пархатарлӑ пултӑрччӗ.

■ **Ирина ПУШКИНА**

# Шупашкар тата Чӑваш митрополичӗ Варнава пилленипе

***Ӗнер, декабрӗн 12-мӗшӗнче, «Хыпар» Издательство ҫурчӗн ӗҫченӗсемшӗн питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ кун пулчӗ. Хаҫат-журнал кӑларас кулленхи кӑткӑс ӗҫре те Православи тӗнне тытса пурӑнма тӑрӑшакансем кӑнтӑрла ҫитеспе Пичет ҫурчӗн 3-мӗш хутне пухӑнчӗҫ. Кунта Шупашкар тата Чӑваш митрополичӗ Варнава «Хыпар» Издательство ҫурчӗн директорӗн-тӗп редакторӗн Валерий Туркайӑн ӗҫ пӳлӗмне кӗлӗ вуласа тасатрӗ, ҫӑмӑл мар ӗҫре вӑй-хӑват сунса пурне те пил пачӗ.***



Высокопреосвященнейший Варнава /Владимир Викторович Кедров/ Валерий Владимировича Ҫӑлаканӑн турӑшне тата Иерусалимран илсе килнӗ Сӑваплӑ Хӗресе парнелерӗ. «Хыпар» ӗҫченӗсем – кӑмӑл пуррисем пурте – Шупашкар тата Чӑваш митрополичӗ Варнава аллинчен Хӑватлӑ ӗҫсем тӑвакан Хусан Турамӑшӗн Сӑнне илме пултарчӗҫ. Владыко панӑ ҫак пӗчӗк турӑшӑн хӑвачӗ питӗ пысӑк – ӑна 2001 ҫулта Шупашкар епархине килнӗ Мускавӑн тата пӗтӗм Руҫӑн Святейший Патриархӗ Иккӗмӗш Алексий пиллесе хӑварнӑ.

Вӑтӑр тӑххӑрмӗш ҫул Чӑваш епархине ертсе пыракан Варнава пирӗн тӑрӑхри халӑхпа питӗ кӑмӑллӑ пулнине пӗлтерчӗ, чӑвашсен хӑйсен тӑван чӗлхине упраса малалла аталантарас пархатарлӑ тӗллевне чунтан ырларӗ. Ӑна пулӑшма килнӗ Гурий /Данилов/ архимандрит Ҫӗнӗ Халал сыпӑкӗсене тата И.Я.Яковлев куҫарнӑ Псалтыре чӑвашла вуласа пачӗ, Издательство ҫуртӗнчи ӗҫ пӳлӗмӗсене кӗлӗ вуласа тасатрӗ.

■ **Раиса ГУРЬЯНОВА.**

Василий КУЗЬМИН сӑнӳкерчӗкӗ

# «Пӗр чӳрече» пулӑшать

Вунӑ е ытларах ҫул каялла кӑна-ха пӗр-пӗр ыйтӑва татас тесессӗн кантурсенче ӗҫ пуҫланиччченех, ир-ирех черет кайса йышӑнни чылайӑшӗн асӗнче. Патшалӑх пулӑшӑвне кӳрессине ҫӗнӗлле, халӑхшӑн меллӗ йӗркелесси – влаҫ тытӑмӗсен паянхи тӗп тӗллевӗ пулса тӑчӗ. Патшалӑх тата муниципалитет пулӑшӑвне илмелли ҫӑмӑл мелӗн витӗмне ял ҫынни те аван туйса илчӗ ӗнтӗ: халӗ нумай функциллӗ центрта /НФЦ/ хӑвна кӑсӑклантаракан темӗн тӗрлӗ ыйту ҫине уҫӑмлӑ хурав тупатӑн. «Пӗр чӳрече» принциппа ӗҫлекен тытӑмра санӑн документусене йышӑнаҫҫӗ, кирлех тӑк – тӳлевсӗр консультаци параҫҫӗ.

Элӗк районӗнчи НФЦа кӑҫалхи 10 уйӑхра 2219 ҫын хӑйӗн ыйтӑвӗпе пынӑ, вӗсенчен 1711-шӗ – патшалӑх тата муниципалитет пулӑшӑвне илнӗ, 508-шне консультаципе пулӑшнӑ. Ҫынсене мӗнле сӑлтав хумхантарнине пӗтӗмлетсен НФЦа пынисенчен пысӑк пайӗ – 1356 ҫын – федераци пулӑшӑвне илме документсем хатӗрлени палӑрнӑ. Ыттисем республика /97/ тата муниципалитет /258/ ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑннӑ. Ял ҫыннишӗн паянхи кун куҫман пурлӑха харпӑрлӑха кӗртсе патшалӑх регистрацийӗн свидетельствине илесси, пурлӑхӑн кадастр хакне палӑртса документсем хатӗрлесси, куҫман пурлӑхӑн правин патшалӑх реестрне кӗресси уйрӑмах пӗлтерӗшлӗ. Паянхи пурнӑҫӑн тепӗр палли – ялта пурӑнаканӑн та халӗ ют ҫӗршывсене тухса ҫӳремелли паспорт пурри. Ӑна алла илес текен те йышлӑ. Ытти ыйтусен шутӗнче – ҫӗр лаптӑкӗ уйӑрасси, тӗрлӗ пособи илме документсем йышӑнасси т.ыт.те.

Хальхи вӑхӑтра Элӗкри НФЦ муниципалитет 34 пулӑшӑвӗпе тивӗҫтерет. Унӑн уполномоченнӑйӗ патшалӑх пулӑшӑвӗ кӳме федерацин территорири тата республикӑри ӗҫ тӑвакан влаҫ тытӑмӗсемпе 75 килӗшӳ тунӑ.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

## *Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗн УКАЗӖ*

## Раҫҫей Федерацийӗн патшалӑх наградисемпе наградӑласси ҫинчен

Ҫӗршыв культурине, телерадиохыпарлава, пичете, ҫыхӑнӑва аталантарас енӗпе тунӑ тава тивӗҫлӗ ӗҫсемшӗн тата нумай ҫул ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн Чӑваш Республикин "Чӑваш Республикин электрон тата кинодокументаци патшалӑх архивӗ" бюджет учрежденийӗн директорне **Николай Ильич МЕДВЕДЕВА II СТЕПЕНЬ "ТӐВАН ҪӖРШЫВ УМӖНЧИ ТАВА ТИВӖҪЛӖ ӖҪСЕМШӖН" орден медалӗпе** наградӑлас.

**Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ**
**В.ПУТИН.**

Мускав, Кремль, 2014 ҫул, декабрь, 5, 756 №

# Саламлатпӑр

Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн 2014 ҫулхи декабрӗн 11-мӗшӗнчи 166-мӗш указӗпе килӗшӳллӗн Чӑваш Республикин ырлӑхӗшӗн нумай ҫул тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫленӗшӗн "Атӑлӑн регионсен хушшинчи валеҫекен сеть компанийӗ" акционерсен уҫӑ обществин генеральнӑй директорӗн заместительне – "Чӑвашэнерго" филиалӗн директорне **Дмитрий Геннадьевич ИВАНОВА "ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИ УМӖНЧИ ТАВА ТИВӖҪЛӖ ӖҪСЕМШӖН"** орден медалӗпе наградӑланӑ;

хореографи искусстви енӗпе тунӑ тава тивӗҫлӗ ӗҫсемшӗн тата пултарулӑхри нумай ҫулхи ӗҫ-хӗлшӗн Чӑваш Республикин "Чӑваш патшалӑх академи юрӑпа ташӑ ансамблӗ" бюджет учрежденийӗн балет артистне **Николай Владимирович ИГНАТЬЕВА "ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛӐХ АРТИСЧӖ"** хисеплӗ ят,

ялхуҫалӑхӗнчи тава тивӗҫлӗ ӗҫсемшӗн тата нумай ҫул тӳрӗ кӑмӑлпа вӑй хунӑшӑн Шӑмӑршӑ районӗнчи "Мир" акционерсен хупӑ обществин тракторист-машинистне **Мексум Минеадиевич НЕВМЕТОВА,** Вӑрнар районӗнчи "Мураты" ялхуҫалӑх производство кооперативӗн водительне **Александр Геннадьевич ФЕДОРОВА "ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВӖҪЛӖ МЕХАНИЗАТОРӖ"** хисеплӗ ят,

культура енӗпе тунӑ тава тивӗҫлӗ ӗҫсемшӗн тата нумай ҫул ӑнӑҫлӑ вӑй хунӑшӑн Чӑваш Республикин вӑтам професси пӗлӗвӗ паракан "Шупашкарти Ф.П.Павлов ячӗллӗ музыка училищи /техникумӗ/" бюджет вӗренӳ учрежденийӗн фортепиано калама вӗрентекен преподавательне тата концертмейстерне **Ирина Юрьевна СЫСОЕВӐНА "ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРӐН ТАВА ТИВӖҪЛӖ ӖҪЧЕНӖ"** хисеплӗ ят,

промышленноҫри тава тивӗҫлӗ ӗҫсемшӗн тата нумай ҫул тӳрӗ кӑмӑлпа вӑй хунӑшӑн Шупашкар хулинчи "АБС ЗЭиМ Автоматизация" акционерсен уҫӑ обществин производство хатӗрлевӗн пайӗн ертсе пыракан инженер-конструкторне **Маргарита Леонидовна ГУСЕВӐНА "ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОҪӐН ТАВА ТИВӖҪЛӖ ӖҪЧЕНӖ"** хисеплӗ ят панӑ.

* * *

Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн 2014 ҫулхи декабрӗн 12-мӗшӗнче кӑларнӑ 168-мӗш указӗпе килӗшӳллӗн Чӑваш Республикин агропромышленноҫ комплексӗн аталанӑвне пысӑк тӳпе хывнӑшӑн Шупашкар районӗнчи «Чӑваш бройлерӗ» акционерсен уҫӑ обществин тӗп зоотехник службин консультант-зоотехникне **Николай Иванович САБЛИНА ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградӑланӑ.

# Ӳкӗтлемелли вӑхӑт вӗҫленчӗ

***Ку – ытахальтен калани мар. Энергетиксем ҫак ӗҫе ҫирӗп шухӑшпа пуҫӑнни куҫкӗрет – вӗсем ыйтнипе республикӑра электроэнергишӗн пысӑк, миллионшар тенкӗлӗх, парӑма кӗнӗ предприятисен ертӳҫисем тӗлӗшпе темиҫе уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ.***

Чӑваш Ен тӗп хулинчи районсен сучӗсенче Шупашкарти электроэнергишӗн вӑхӑтра тӳлемен «Деон» УК», «Коммунальщик» УК» ОООсен ертӳҫисем пирки пуҫарнӑ уголовлӑ ӗҫсене тишкереҫҫӗ. Унсӑр пуҫне 2014 ҫулхи ноябрӗн 13-мӗшӗнче «Трест-5» АУО ертӳҫи тӗлӗшпе приговор палӑртнӑ, организаци пуҫлӑхне уголовлӑ майпа айӑпласа штрафлама йышӑннӑ.

Уголовлӑ ӗҫсем пуҫарнин сӑлтавӗ – «Чӑваш энергосбыт компанийӗ» АУО /«ЭСК РусГидро» АУО тытӑмне кӗрет/ пӗлтӗр тата кӑҫал панӑ заявленисем. Явап тыттарма ыйтса ҫырнӑ вӑхӑт тӗлне «Трест-5» АУО парӑмӗ 4,6 млн яхӑн тенкӗпе танлашнӑ, «Деон» УК» ОООн – 7 млн ытла, «Коммунальщик» УК» ОООн – 0,67 млн тенкӗ.

– Шел те, республикӑри предприятисемпе организацисен усӑ курнӑ электроэнергишӗн тӳлемен парӑмӗ ӳссех пырать, – лару-тӑрӑва уҫӑмлатса хаҫат корреспондентне ӑнлантарчӗ **Чӑваш энергосбыт компанийӗн ӗҫ тӑвакан директорӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлакан Константин Афанасьев.** – ЖКХ отраслӗнче кӑна 2014 ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне ҫак кӑтарту 575 млн яхӑн тенке ҫитрӗ. Парӑма шыраса илмелли витӗмлӗ мелсенчен пӗри – эпир саккунпа килӗшӳллӗн право хуралӗн органӗсенчен уголовлӑ ӗҫсем пуҫарма ыйтни. Кӑҫал кӑна ЧЭСК ШӖМе, Прокуратурӑна тата Раҫҫей ФССП Чӑваш Енри управленине ҫакнашкал 13 заявлени панӑ.

Палӑртни вырӑнлӑ: ҫав 13 ыйтуран тӗп пайӗ – Куславкка тата Шупашкар районӗсен, Улатӑр, Канаш тата Шупашкар хулисен ЖКХ предприятийӗсен ертӳҫисем тӗлӗшпе. Пиллӗкӗшӗпе уголовлӑ ӗҫ пуҫарассине хирӗҫленӗ, анчах ултташне халӗ право хуралӗн органӗсенче тишкереҫҫӗ. Ҫав ыйтусенче энергетиксем Шупашкарти «Жилищник» УК» ООО /2014 ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне парӑм 3,71 млн тенкӗ пулнӑ/, «Столица» УК» ООО /1,66 млн/, «Чайка-2» ТСЖ /0,15 млн/, Канашри «Центральный» ООО /5,44 млн/, «Заводской» ООО /3,96 млн/, Куславкка районӗнчи «Теплоснаб» ООО /1,14 млн/ ертӳҫисене явап тыттарма ыйтаҫҫӗ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

# Таможня ирĕк парать...

*Кĕçнерникун Шупашкарта Атăлçи таможня управленийĕн коллегийĕн анлă ларăвĕ иртрĕ. Правительство çуртĕнче йĕркеленĕ канашлăва Чулхуларан управлени пуçлăхĕ Сергей Рыбкин, Атăл тăрăхĕнчи регионсен çак управлени тытăмне кĕрекен таможнисен ертÿçисем килнĕ, калаçăва ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăнчĕ.*



Ларăвăн кун йĕркинчи ыйтусем пирки кашни çынна пырса тивекеннисем теейĕн: таварсене класификацилессии, таможня операцийĕсен мониторингĕ тата ыт.те – вĕсем çĕршывăн экономика хăрушсăрлăхне хÿтĕлессипе тÿрремĕнех çыхăннă пулин те вулаканшăн питĕ интереслĕ пулассăн туйăнмасть. Журналистсен республикăпа тÿрремĕнех çыхăннă ыйтăвĕсене С.Рыбкин уйрăммăн хуравларĕ. Вăл палăртнă тăрăх – кăçалхи 11 уйăхра Чăваш таможня постĕнче тулашри суту-илÿ калăпăшĕ АПШн 232 млн долларĕпе танлашнă. Ку виçе пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 27% ытла чакнă. Çакă чи малтанах «Промтрактор» АУО туса кăларакан тракторсене экспортпа чикĕ леш енне ăсатассин кăтартăвĕсем пĕчĕкленнипе сăлтавланнă. «Концерн паян ытларах таможня союзĕн шалти рынокĕ валли ĕçлет, çавăнпа тÿлевсен виçи те чакнă», – пĕлтерчĕ Сергей Валентинович. Апла пулин те Чăваш Ен тулашри экономика ĕç-хĕлĕнчен бюджета хывнă укçа 1,2 млрд тенкĕрен иртнĕ – «ку цифра япăх мар, çапах вăл та иртнĕ çулхинчен пĕчĕкрех».

Управлени пуçлăхĕ çакăнта кризис, Раççее хирĕç санкцисен витĕмĕ пуррине йышăнать. Импорт тĕлĕшпе, сăмахран, чылай çĕршывран пахчаçимĕç, ытти апатçимĕç кÿме чарнă. Сăмах Европа пĕрлĕхĕ, Америка, Канада, Австрали пирки пырать. Анчах «сăваплă вырăн пушă пулмасть» теççĕ вĕт – çак вырăна Турци, Китай, ытти çĕршыв йышăнаççĕ.

Управлени тытăмĕнче автотранспортпа çыхăннă таможня пункчĕсем çук, сывлăш транспортне вара тĕрĕслеççĕ. Кунта та ĕçлемелĕх пур. С.Рыбкин сывлăш транспорчĕпе çыхăннă наркотрафиксем вăй илнине пытармарĕ: «Сывлăш çулĕсемпе кунта наркотик кÿрекенсене тытса чарнă тĕслĕхсем пур. Унашкаллисен шутĕнче – наркăмăшлă хутăшсене çăтса чикĕ урлă каçаракансем те, ытти мелпе усă куракансем те».

Чăваш Енри таможня посчĕн ĕçне вăл ырласа хакларĕ: «Тĕллевсене пурнăçлать, ытти тĕрĕслев органĕпе тачă çыхăну тытса ĕçлет». Тепĕр тесен вăл кăна мар, Шупашкар таможенникĕсене ЧР Пуçлăхĕ М.Игнатьев та мухтарĕ: «Хăйсен ĕçне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлаççĕ».

Ларăва тĕрлĕ регион представителĕсем пухăннине кура /сăмах май, вĕсен йышĕнче хăй вăхăтĕнче Чăваш таможнине ертсе пынă Юрий Владимиров та пулчĕ. Халь вăл – Пушкăртстанăн «тĕп таможенникĕ». Маларах Оренбург таможнине ертсе пынăччĕ. Унтах генерал званине илнĕ. Раççей таможнин тытăмĕнче сумлă çак звание тивĕçнĕ пĕртен пĕр чăваш/ Михаил Васильевич республика аталанăвĕпе кĕскен паллаштарни вырăнлă пулчĕ. Вăл палăртнă тăрăх – йывăрлăхсем пур пулин те макроэкономикăн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕсемпе Чăваш Ен çулталăка иртнĕ çулхинчен ăнăçлăрах вĕçлет. Промышленноç производствин индексĕ 104% танлашмалла, АПКра – 105%, строительствăра – 102% ытларах.

– Раççей Президенчĕ палăртнă тĕллевсене пурнăçлама тăрăшатпăр, – терĕ М.Игнатьев. – Çавăн пекех пиртен РФ Президенчĕн Атăлçи округĕнчи полпречĕ Михаил Бабич та питĕ çирĕп ыйтать, мĕнпур цифрăпа кăсăкланать...

Таможньăпа çыхăннă ĕçе илес тĕк – Михаил Васильевич ыйтупе пĕрле пуçарнă проект тинех тÿрре тухассине палăртрĕ, вĕсем кунта автомобильсем валли кабель производстви уçаççĕ. Паллах, «Хĕвел» завод пирки те сăмах пулчĕ. Унăн хĕвел модулĕсем рынока тухнă та ĕнтĕ.

С.Рыбкин республика ертÿçине тав тунă май таможня енчен малашне те тĕрев пуласса шантарчĕ: «Эпир те экономика аталанăвне пулăшатпăр, çавăнпа та Чăваш Енри инвестици климатне лайăхлатсах пырас ĕçе хамăрăн тÿпене хывăпăр».

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

### *Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕ*

## Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Чăваш Ен историйĕн вĕренÿпе методика комплексĕн концепцине хатĕрлеме пĕр хутчен паракан грантĕ çинчен

Çитĕнекен ăрăва гражданла-патриотла воспитани парас, Чăваш Енĕн историпе культура еткерĕпе интересленме хавхалантарас тĕллевпе **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2015 çулта Чăваш Ен историйĕн вĕренÿпе методика комплексĕн концепцине хатĕрлеме пĕр хутчен паракан грантне /малалла – Чăваш Республикин Пуçлăхĕн грантĕ/ туса хурас.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн грантĕн виçине палăртмалла;

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн грантне памалли йĕрке çинчен калакан положение çирĕплетмелле.

3. Çак Указ ăна официаллă майпа пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кунран вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, декабрь, 8, 162 №.

ÇУЛ ÇИНЧЕ

# Хăрушсăрлăх – чи кирли

***ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин Правительствăн çул-йĕр хăрушсăрлăхне тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен комиссийĕн ларăвне ирттерчĕ. Унта ЧР транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министрĕ В.Филиппов, ĕç тăвакан влаç органĕсен /çав шутра муниципалитет йĕркеленĕвĕсен/, транспорт комплексĕн предприятийĕсемпе общество организацийĕсен представителĕсем хутшăнчĕç.***

Çулсем çинчи лару-тăру чылай чухне водительтен – вăл правилăсене пăхăннинчен, кирек епле кăткăс самантра та хăйне алăра тытма пултарнинчен т.ыт.те – нумай килет. Çавăнпах водительсене хатĕрленĕ чухне хăвна тĕрĕс хак пама, ыттисене хисеплеме вĕрентессине тĕпе хумалла. Шел, ку енĕпе автошкулсем тĕлĕшпе сахал мар ыйту сиксе тухать.

«Водительсене вĕрентес ĕçхĕле лайăхлатмалли куç кĕрет, – терĕ ЧР ШĔМĕн ÇÇХПИ управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Романов. – Кашни улттăмĕш аварие руль умĕнче виçĕ çултан сахалрах ларакан çамрăксем тăваççĕ. Çак вăхăт тĕлне ку ушкăнри çынсен айăпĕпе пулнă 275 аварие шута илнĕ. Вĕсем çул-йĕр правилисене пĕлмеççĕ е пăхăнмаççĕ, хăвăртлăха юратаççĕ...».

Çулталăкра вăтамран водитель правине 20 пин çын илет. Шел те, пĕрремĕш хут кайсах экзамен тытакан питĕ сахал. Çакă тÿрремĕнех автошкулсенче паракан теори тата практика пĕлĕвĕ çителĕксĕррине çирĕплетет. Кăçалхи августра йышăннă çĕнĕ вĕренÿ программисем ĕç-хĕле лайăх енне улăштарасса шанас килет. Водительсене хатĕрлеме çĕнĕ предметсем кĕртнисĕр пуçне вĕренÿ учрежденийĕсенчен те çирĕпрех ыйтма пуçланă. Вĕренÿ программисем тата пурлăхпа техника никĕсĕ тивĕçтермен автошкулсене ÇÇХПИ ĕçлеме ирĕк памасть. В.Романов каланă тăрăх – хальхи вăхăтра 54 автошкултан 24-шĕ кăна çак ирĕке илме пултарнă.

ÇÇХПИ управленийĕ шкул автобусĕсене те сăнасах тăрать. Районсенчи уйрăмсем вара вырăнта техникăпа мĕнле усă курнине тĕрĕслеççĕ, водительсен, вĕренÿ учрежденийĕсенчи яваплă çынсем çул-йĕр правилисене пăснă тĕслĕхсене шута илсе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма ЧР Вĕренÿ министерствине ярса параççĕ. Кăçалхи 11 уйăхра шкул автобусĕсем тĕлĕшпе йĕркене пăснă 38 тĕслĕхе шута илнĕ. Ку пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен чылай сахалрах.

Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăра 327 шкул автобусĕ шутланать. Вĕсенчен 299-шĕ куллен тĕрлĕ 637 маршрутпа çула тухать. Техника паркĕ çĕнелсех пырать. 2006 çултан «ватăраххисемпе» усă курмаççĕ. Шкул автобусĕсен тахографсем пулмаллине палăртрĕç.

Хĕллехи вăхăтра автоçулсене пăхса, тасатса тăма хатĕрленни çинчен «Волга» çул-йĕр управленийĕн пуçлăхĕн заместителĕ Сергей Мартынов каласа кăтартрĕ. Юр тасатмалли хăватлă техника та, ытти йышши те пуррине, хăйăр, тăвар хутăшĕ те çителĕклине пĕлтерчĕ. Çулсене пăхса тăракан организацисем çулсен хĕрринчи йывăç-тĕме касса тирпейленĕ. Кирлĕ вырăнсенче хăйăрпа тăвар хутăшĕ тултарнă ешчĕксем вырнаçтарнă. Регион тата муниципалитет пĕлтерĕшлĕ çулсем çинче пулма пултаракан чрезвычайлă лару-тăрăва сирме «Чувашавтодор» ОАОн Канашри, Шупашкарти тата Çĕмĕрлери базисенче хăвăрт ĕçлекен механизациленĕ виçĕ отряд туса хунă.

Анчах ку сăмахсем транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министрне Владимир Филиппова тивĕçтерсех çитереймерĕç пулас. «Октябрьте пĕрремĕш юр ÿксен мĕнле пулчĕха? Хамăр та куртăмăр, халăх енчен те асăрхаттарусем пулчĕç. Çине тăрса ĕçлемелле», – терĕ вăл.

Ларура пĕлтернĕ тăрăх – 2014 çул вĕçленнĕ тĕле республикăра фото тата видеофиксацин 117 стационар комплексне вырнаçтарĕç. Авари пулас хăрушлăх пысăк вырăнсенче автомат режимĕпе ĕçлекеннисемпе усă курни водительсен тимлĕхне ÿстерме, инкекрен сыхланма пулăшасса шанаççĕ. Çавăн пекех йĕркене пăсакансем тĕлĕшпе йышăнакан административлă санкцисем бюджета килекен хукрат виçине те пысăклатма май парĕç. Хальхи вăхăтра Чăваш Республикинче «Поток», Арена», «Кречет» комплекссемпе усă кураççĕ.

Юлашкинчен ларăва хутшăннисем 2015 çулта республикăри çулсем çинче хăрушсăрлăха тивĕçтерес тĕлĕшпе пурнăçлама палăртакан ĕç-хĕл планне пăхса тухрĕç.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

ТРАНСПОРТ

# Эсир тÿлев карттипе çул çÿретĕр-и?

***Правительство çуртĕнче профтехучилищĕре, шкулта вĕренекенсем, студентсем республикăри автомобиль тата хуласенчи электричество транспорчĕсемпе çÿренĕ чухне кондуктора е водителе укçа аларан памасăр тÿлевпе татăлмалли карттăпа усă курассипе çыхăннă ыйтăва сÿтсе яврĕç.***

ЧР Министрсен Кабинечĕн 2013 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнчи «Чăваш Республикин талккăшĕнче пассажирсен пĕрлехи транспорчĕпе çÿренĕшĕн тÿлевпе укçасăр татăлмалли карттă çинчен» йышăнăвне пурнăçласа Чăваш Енре пурăнакансене, çав шутра асăннă заведенисенче вĕренекенсемпе студентсене çав карттăна «Транспортăн пĕрлехи картти» общество туса парать. Терминалра укçа йышăнса ăна вăя кĕртессине те вăлах йĕркелет.

ЧР Транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министерстви пĕлтернĕ тăрăх – тÿлевсĕрех карттă хатĕрлесе паракан тата терминалпа укçа йышăнса çав хатĕр вăйне çирĕплетекен пункт Шупашкарта – 14, Çĕнĕ Шупашкарта – 5, Канашра – 2, Çĕмĕрлере, Улатăрта, Етĕрнере, Сĕнтĕрвăррире, Çĕрпÿре, Патăрьелте, Куславккара – 1-ер. Укçа хурса транспорт карттин вăйне кĕртмелли терминала Раççей Перекет банкĕн уйрăмĕсенче те вырнаçтараççĕ. Хальĕхе вăл Çĕнĕ Шупашкарта – 7, Канашра, Çĕмĕрлере, Çĕрпÿре, Етĕрнере – 1-ер, ытти – Шупашкарта.

«2015 çул вĕçлениччен 200 ытла лартма палăртрăмăр», – терĕ банкăн Чăваш Енри уйрăмĕн ертÿçин çумĕ Артем Пищик. Министерство секторĕн ертÿçи Артем Пилкин кăçалхи сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне шкулта вĕренекенсем валли – 7 пин, студентсем валли 10 пин карттă хатĕрленине, малтанах унпа яш-хĕре вĕренÿ заведенийĕсен администрацийĕсем тăрăшнипе тивĕçтернине пĕлтерчĕ. Ÿлĕм ăна илме общество пунктне çамрăксен хăйсен кайма тивет. Асăрхаттаратпăр: хăвăрпа пĕрле эсир вĕренекен пулнине çирĕплетме администрацирен справка е студент билечĕ илме ан манăр. Карттă вăйне кĕртме кашни уйăхăн 20-мĕшĕнчен пуçласа çитес уйăхăн 5-мĕшĕччен çулçÿрев билечĕн хакĕ чухлĕ укçа хывмалла. Терминала нухрат хурас умĕн документ кăтартмалла мар.

Общество директорĕ Артем Горбунов терминала укçа хывакансем час-часах тăвакан йăнăшсем çинчен асăнчĕ. Пĕрисем укçа тÿлеме хунă купюрăна терминал туртса илессе тата касса чекĕ тухасса кĕтмесĕрех карттăна кăларса илеççĕ – тÿлев хăйĕн йĕркипе вĕçленейменнипе, укçа вырăна çитмест. Иккĕмĕшсем укçа çулçÿрев билечĕн хакĕнчен е нумайрах, е сахалрах хывса, висçĕмĕшсем укçа тытакан счетран общество счечĕ çине нухрат куçарса çулçÿревшĕн тÿлеймеççĕ. Хальлĕхе техника сăлтавне пула карттăпа терминал çыхăнăвне йĕркелемен. Ку ыйтăва килес çул татса парасса шантараççĕ.

Карттăна типтерлĕ упрамалла. Çухатсан çĕннине тутарма обществăн Шупашкарти тĕп офисне кайса черете тăмалла. Хатĕрлесе париччен темиçе эрне кĕтме тивет. Çавăнпа шанчăклă вырăна чиксе çÿремелле. Республикăра транспорт карттине илмен çын чылай-ха. Министерство пассажирсенчен ку ыйтăва тăсса ямасăр татса пама ыйтать.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

# Çичĕ ют таварĕ хухтăр, хамăрăн хушăнтăр

***Ĕнер Михаил Игнатьев республика Пуçлăхĕ çумĕнчи Экономика тата Инвестици илĕртÿлĕхне вăйлатассипе çыхăннă ĕç канашĕсен пĕрлехи ларăвне ирттерчĕ.***



сар.ru сăнÿкерчĕкĕ

Вăл тата Япони компанийĕн йĕркелÿçи Ичиро Камада господин "Автомобильсем валли кабель жгучĕсен производствине Шупашкарта йĕркелесси" проекта пурнăçа кĕртес тĕллевпе ЧР Министрсен Кабинечĕпе "Фуджикура Аутомотив РУС Чебоксары" общество хушшинчи пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен калакан килĕшĕве алă пусрĕç.

М.Игнатьев ют çĕршывсенчен турттаракан тавар калăпăшне пĕчĕклетес, çавăн йышши продукциех вырăнта туса кăларас тĕлĕшпе "ЧЭАЗ", "Элара", "Электроприбор" /Улатăр/, "Эра", "ВНИИР", "ВНИИР-Прогресс", "БРЕСЛЕР", "Акконд" обществăсем лайăх ĕçленине, ытти предприятисем ырă тĕслĕх пулнине палăртрĕ. Çĕнĕ Шупашкарти хĕвел модулĕсен хатĕрлекен заводра 306 çынна ĕç вырăнĕпе тивĕçтерессине, продукци кăларма пуçланине, пурăнмалли çурт-йĕр тума федерацин 16,3 гектар çĕрне /Шупашкартан тухсан Етĕрне çулĕ хĕррине/ тĕп хулана парас ыйтăва татса панине пĕлтерчĕ.

ЧР экономика министрĕ Владимир Аврелькин республикăра тавар ытларах туса кăларса чикĕ леш енчен кÿрекен продукци калăпăшне пĕчĕклетессишĕн, Чăваш Енре хатĕрлекенние ÿстерессишĕн тăвакан ĕç еплерех пыни çинчен каласа пачĕ. Юлашки çулсенче çĕршыври вун-вун предприяти паха продукци хатĕрленипе палăрчĕ. Анчах вĕсен йышĕ çав-çавах нумай мар. Халăха паха таварпа тивĕçтерекенсен хисепне палăрмаллах ÿстермелле. Хальхи вăхăтра çĕршыври мĕнпур тавар çаврăнăшĕнче чикĕ леш енчен кÿни 79% йышăнать. Раççей Правительстви унăн калăпăшне çывăх çулсенче 29% чакарма тĕллев лартнă. Вăл икĕ тапхăртан тăрать. Пĕрремĕшĕ производствăна модернизацилесе çĕнĕ те паха тавар туса кăларассине йĕркелеме хыснаран укçа уйăрассипе çыхăннă. Сăмахран, кăçал республикăри промышленноç предприятийĕсем 650 млн тенкĕ илнĕ.

Министр Елчĕкри сыр хатĕрлекен завода килес çулхи пĕрремĕш кварталта хута яма шантарнине, çĕнĕ оборудовани туяннине пĕлтерчĕ. "Сăмаха çилпе вĕçтермĕç-ши?" – ыйтрĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ. – Унта ĕç мĕнле пынипе кăсăклансах тăрăр. Туризма аталантарассипе çыхăннă икĕ проект Муркаш районĕпе Шупашкарта хăçан пурнăçа кĕрĕç?"

Пĕрремĕшĕнче инфратытăм хываççĕ. Иккĕмĕшĕнче ăна епле пурнăçа кĕртесси çинчен тĕп хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков пĕлтерчĕ. Пĕтĕмлетсе каласан – Шупашкарта та туристсене хальхинчен ытларах йышăнма палăртнă. Министр докладне сÿтсе явма "Экра", "В.И.Чапаев ячĕллĕ производство пĕрлешĕвĕ", "ДМ-Сервис", "Ольдеевская" АФ", "Электроавтомат" обществăсен ертÿçисем О.Саевич, М.Резников, И.Анисимов, Е.Беликова, Е.Валидов хутшăнчĕç.

Ларура "Турбоком" общество директорĕ В.Овчаренко промышленноçра, агропромра усă куракан автомобильпе трактор двигателĕсем валли Шупашкарта туса кăларма палăртнă турбокомпрессор производствин проекчĕпе паллаштарчĕ.

ЧР строительство министрĕ Олег Марков федерацин пурăнмалли çурт-йĕр тума пулăшакан фончĕпе аллă-аллăн тытăнса ĕçлесе кăçал республикăра пурăнмалли вырăн мĕн чухлĕ хута ярассипе, ку енĕпе пурнăçа кĕртме палăртнă тĕллевсемпе паллаштарчĕ.

Банксен ĕç-хĕлĕпе, доллар хакланса, тенкĕ йÿнелсе пынипе çыхăннă ыйту çинче ЧР Наци банкĕн тата Раççей Тĕп банкĕн Атăл-Вятка тĕп управленийĕн Чăваш Енри уйрăмĕн ертÿçи А.Логвинов чарăнса тăчĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

ЛАРУ

# "Çĕрулми – 2015" курав каллех хăнасене пухĕ

***"Агро-Инновацисем" хысна унитари предприятийĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн заместителĕ – ялхуçалăх министрĕ Сергей Павлов ертсе пынипе регионсен хушшинчи "Çĕрулми – 2015" курава ирттерекен комитет ларăвĕ пулнă. "Аграрисемшĕн вăл пысăк пĕлтерĕшлĕ, – тенĕ министр. – Çитес çул çиччĕмĕш хут иртĕ. Çĕнĕлĕхсемпе тĕлĕнтерессе шанатпăр".***

"Агро-Инновацисем" ХУП директорĕ, куравăн ĕç тăвакан ушкăнĕн ертÿçи Николай Васильев пĕлтернĕ тăрăх – йăлана кĕнĕ уяв Раççейри тата унăн тулашĕнчи АПК предприятийĕсене ĕçлĕ тĕлпулусене анлăрах явăçтарма, экспозицисем тăратма, реклама йĕркелеме май парĕ.

Куравра ăслăлăхпа-практика конференцийĕ те пулĕ. Ăна епле хатĕрленнипе Раççей Ялхуçалăх академийĕн А.Г.Лорх ячĕллĕ çĕрулми хуçалăхĕн ăслăлăх-тĕпчев институчĕн директорĕн заместителĕ Борис Анисимов паллаштарчĕ.

"Çĕрулмин ку чухнехи промышленноç никĕсĕ çинчи инноваци аталанăвĕн лару-тăрăвĕпе малашлăхĕ" конференци программипе килĕшÿллĕн хăнасем пĕрлехи ларăва тата "çавра сĕтелсене" хутшăнĕç. Вĕсен программи анлă: "Çĕнĕ сортсем тата вируссăр вăрлăх ĕрчетес ĕçри инноваци технологийĕ. Раççейри лару-тăру тата пĕтĕм тĕнчери опыт", "Раççейĕн апат-çимĕç рынокĕнчи çĕрулмипе унран хатĕрленĕ çимĕç маркетингĕ: пахалăх, техника регламенчĕ, чĕркев", "Çĕрулми тухăçĕпе пахалăхне ÿстермелли удобрени витĕмлĕ тытăмĕ", "2015 çулта çĕрулми чирĕсемпе сăтăрçисем епле сарăлассине шута илсе вĕсенчен тата çумкурăкран хÿтĕлемелли майсем", "Çĕрулмине инноваци технологийĕпе туса илме техникăпа тивĕçтересси".

Курав кунĕсенче "иккĕмĕш çăкăртан" хатĕрленĕ тĕрлĕ çимĕçе тутанса пăхăпăр, паха вăрлăх туянма пулĕ. Экспозицире ăслăлăхри, селекцири тата производствăри ку чухнехи çитĕнÿсемпе, чире, шăрăха тÿсĕмлĕ сортсемпе, паха вăрлăх çитĕнтерекен предприятисен опычĕпе паллашма пулать.

"Çĕрулми-2015" курав çитес çул Шупашкарăн Николаев космонавт урамĕнчи ялхуçалăх ярмăрккинче февралĕн 19-20-мĕшĕсенче иртет. Ăна çуллĕ шайра ирттермешкĕн хатĕрленме тытăннă ĕнтĕ.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

ПРЕССА

# Тĕрĕслĕх – акă вăл чи пахи

***«Раççейшĕн» Халăх фрончĕ сĕннипе Раççейри Аслă суд çулталăк вĕçлениччен журналистсене панă штрафсене тишкерсе хăйĕн пĕтĕмлетĕвне тăвать.***

Юлашки вăхăтра массăллă информаци хатĕрĕсен /МИХ/ кăларăмĕсенчи критика статйинчи «сăнар» /хальлĕхе ăна çапла калăпăр/ хăйĕн чыспа тивĕçлĕхне хÿтĕлеме тата кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен сиен кÿнĕшĕн компенсаци ыйтса тĕрлĕ шайри суда тавăç хучĕ çитернĕ тĕслĕх нумайланнă. Çакăн çинчен РФ Аслă сучĕн председателĕн заместителĕ Василий Нечаев пĕлтернĕ.

Кун пек пĕтĕмлетĕве Аслă суд юлашки хут 2005 çулта тунă. Унăн йышăнăвĕнче кăмăл-сипет тĕлĕшне сиен кÿнĕ е саплаштармалли укçа-тенкĕ хур тунин калăпăшĕпе шайлашмаллине, вăл массăллă информаци хатĕрĕсен ирĕклĕхне хĕсмелле маррине палăртнă.

Журналистсене право хÿтлĕхĕ паракан центртан пĕлтернĕ тăрăх – регионсенчи судсем хур тунин калăпăшне час-часах пысăклатса кăтартаççĕ имĕш. Суд йышăнăвĕпе палăртнă компенсаци вырăнти хăш-пĕр пĕчĕк редакцине чухăнлантарсах ярать е кăларăма панкрута çитерет. Нумаях пулмасть центрта Краснодар крайĕнчи «Новая газета Динского района» хаçатри ĕçтешсем пулнă, вĕсем кунта хăйсен редакторне хÿтĕлесе çитнĕ. Пĕр бизнесмена Шарль Перро юмахĕнчи Карабас маркиз сăнарĕпе танлаштарнăшăн вырăнти суд йышăнăвĕпе хаçат редакцине 500 пин тенкĕлĕх айăпланă. Апелляци сучĕ хыççăн ку хисепе 100 пин тенкĕне çити чакарма май килнĕ-ха, ăна тÿлесе татма та редакцин кредит илме тивнĕ.

Центра килнĕ çырусене тĕплĕ тишкерсессĕн вырăнти суд массăллă информаци хатĕрĕсене ку е вăл критика статйишĕн кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен сиен кÿнин калăпăшĕнчен чылай пысăклатса штрафлани куç кĕрет, – тенĕ Халăх фрончĕн журналистсене право хÿтлĕхĕ паракан центр ертÿçи Наталья Костенко. – Çав вăхăтрах пĕр евĕрлĕ статьяшăнах федерацин пичет кăларăмĕсене тата журналисчĕсене 50-70 пин тенкĕлĕх штрафлаççĕ пулсан, регионсенче – 100-200 пин тенкĕлĕх. Шухăшласассăн, облаçсемпе республикăсенчи МИХсем финанс тĕлĕшĕнчен самай чухăн. Тата тиражĕ те центртисемпе танлаштарсан чылай пĕчĕк. Апла пулсан кăмăл-сипет тĕлĕшпе сиен кÿни пĕчĕкрех пулмалла. Çавăнпа та эпир Аслă судран юлашки 10 çул хушшинчи суд йышăнăвĕсене тишкерсе пĕтĕмлетме, ку сферăра кăткăсланнă ыйтăва татса парассине пĕрпеклетме ыйтрăмăр. Тĕрĕс мар информаци пичетленĕ хаçат редакцийĕсене федераци, регион тата муниципалитет шайĕнче /кашнин хăйĕн виçи пулмалла-çке!/ явап тыттарни чăнлăхпа тата тĕрĕслĕхпе килĕшсе тăтăр. Аслă судăн ăнлантарăвĕ çитес çултан хаçат ĕçĕнчи çак пăтăрмаха пĕтерсе пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле лайăхлатма май парĕ.

■ **Юрий ЛИСТОПАД**

# Хамăрăн тĕп пуянлăха – чĕлхемĕре – упрассишĕн

***Тăван халăхăмăрăн тĕп хутлăхĕнче – Чăваш Енре – çакнашкал ыйту çивĕчленни ăнланмалла мар пулăм пек туйăнать пулин те ЮНЕСКО чăваш чĕлхине те çухалса пыраканнисен шутне кĕртни чĕлхемĕр инкекĕ çинчен уççăнрах калаçма тытăнтăмăр. Шывра путакан çын улăм пĕрчинчен те пулин тытăнса юлса çăлăнасшăнни евĕрлех чăвашлăхшăн çунакан йăхташсем те кĕрĕк арки йăваласа ларасшăн мар. Çакнашкал шухăш çирĕпленчĕ Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институтĕнче иртнĕ "Чăваша чăваш чĕлхи кирлĕ" форума хутшăннă май. Анлă канашлăва Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 115 çул çитнине халалласа Чăваш наци конгресĕ, çÿлерех асăннă тата республикăри вĕрентÿ институчĕсем, "Чăваш Республикин учителĕсен ассоциацийĕ" общество организацийĕн чĕлхипе литература вĕрентекенĕсен секцийĕ йĕркеленĕ.***

Форума, тĕпрен илсен, шкулсенче тата ача сачĕсенче наци чĕлхине вĕрентес ыйту тавра пуçарнă. Çавăнпа Чăваш Енри вĕрентÿпе çамрăксен политикин министрĕн пĕрремĕш çумĕ Светлана Петрова чи малтан сăмах илчĕ. Калаçу пуçламăшĕнчех вăл чăваш чĕлхипе литературине, тăван ен культурине вĕрентекенсен ассоциацийĕ пурришĕн хĕпĕртенине палăртрĕ. "Сирĕн шухăша пĕлмеллех, илтмеллех пирĕн. Вĕренÿ тытăмĕ патшалăхăн çĕнĕ стандарчĕсем çине куçнă май ĕçсене мĕнле йĕркелесе пымаллине пĕрле канашласа йышăнмалла", – терĕ Светлана Владимировна.

Стандарт тенĕрен, республикăра 1-4 классенчи вĕрентĕве çĕнĕлле йĕркелеме программăсене хатĕрлесе çитерĕ, 2015 çулта вара 5-9-мĕшсем валли те хатĕр пулмалла. Вĕренÿ тытăмĕнчи улшăну – Федерацин патшалăх çĕнĕ стандарчĕсем çине куçасси – ача сачĕсене те пырса тивĕ. Çавна май наци чĕлхине шкулсенче, ача сачĕсенче мĕнле йĕркепе-хурăмпа вĕрентесси çинчен те тĕплĕн шухăшласа йышăнмалла. Светлана Владимировна çакăн çинчен форумра пусарсах ăнлантарнă май юлашки вăхăтра республикăри хăш-пĕр шкулăн вĕренÿ эрнине пилĕк кунлăх йĕрке çине куçас опычĕ çинчен те самай çивĕч калаçрĕ:

– Вăтам шкулта çĕнĕ стандартсене пăхăнса пĕлÿпе воспитани памашкăн тытăнсан наци компоненчĕ валли пилĕк кунлăх вĕренÿ эрни меллĕ мар. Тăван чĕлхелитературăна, тăван ен культурине вĕрентессиултă кунлăх программа чухне кăна тивĕçлĕ шайра пулса пыраять. Çавна май министерство республикăри мĕнпур районти шкулсене халиччен пекех – вĕренÿ эрнине кĕскетмесĕр – ĕçлесе пымашкăн сĕнет, – терĕ вăл.

Çак сăмахсене илтсен залра ларакансенчен чылайăшĕ алă çупса ячĕ: хĕпĕртемелли хыпар пулчĕ ку чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсемшĕн.

Вулакана аса илтерсе хăварни вырăнлă-тăр: пилĕк кунлăх тытăма куçнă шкулсенчен хăш-пĕринче сехетсене кĕскетессине наци компоненчĕ шучĕпе меллештернĕ. Тĕслĕхрен, Элĕкри вăтам шкулта 5-9 классенче тăван чĕлхепе литература урокĕсен шучĕ чакнă. Республикăри массăллă информаци хатĕрĕсенче, çав шутра "Хыпарта" та, çак ыйтăва самаях çивĕччĕн çутатрĕç. Акă мĕншĕн вĕрентÿ тытăмĕн республикăри пуçлăхĕсем самай пуç ватнă хыççăн пиçсе çитнĕ сĕнĕве халăх хавхаланса йышăнчĕ.

Чăваш наци конгресĕн пĕрремĕш вице-президенчĕ Валерий Клементьев сăмахĕнче чăваш чĕлхине хÿтĕлесе хăварасси тĕпре пулчĕ. Конгресс тулашри йăхташсен тăван чĕлхене вĕрентес ĕçри йывăрлăхĕсемпе халиччен те кĕрешнĕ, малашне вара тата та çине тăма тивĕ: хăш-пĕр шкулта вĕрентекенсем ватăлса пыраççĕ, вĕсен ĕçне малалла тăсма вара хатĕр специалист çукки ура хурать. Вĕренÿ кĕнекисемпе тивĕçтерес ыйту та çаплипех çивĕчленсе пыратьмĕн. Апла пулин те республика тулашĕнче пурăнакансен тĕлĕшпе савăнмалли хыпарсем çук мар. Акă аякри Казахстан çĕрĕнче



чăвашсем эрнере 4 урок тăван чĕлхе вăрттăнлăхĕсене шĕкĕлчеççĕ.

Республикăри тĕрлĕ шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕренÿ планĕпе килĕшÿллĕн мĕнле вĕренсе пымалли çинчен ЧР вĕрентÿ институчĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедрин ертÿçи Анна Егорова форума килнĕ вĕрентекенсене тĕплĕн ăнлантарчĕ. Анна Семеновна шкулсенче наци сăн-сăпатне еплерех кăтартмаллине те уçăмлатрĕ. Асăннă форум Çеçпĕле халалласа иртнине шута илсе поэт çырнине вырăнлă илсе кăтартрĕ: "...Авал асаттесене мăшкăл тунисене манас мар. Мăшкăл айĕнчен чĕрĕ тухнă чĕлхе тĕнчере çухалмĕ." Çак сăмахсен çумне вăл çапла хушса хучĕ: "Хамăр тăрăшсан..."

Чăваш чĕлхипе кулленхи калаçура мĕнле усă куратпăр-ха паян эпир?Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн этнологипе социологи уйрăмĕн ăслăлăх ĕçченĕн, Испанирен Чăваш Ене килсе тĕпленнĕ социологăн Алос и Фонт Экторăн, тĕпчевĕсем çак чăнлăха куç умне туллин кăларççĕ – çÿçентерсех яраççĕ. Кил-йышра чăвашла чиперех калаçакан ачасем шкул алăкĕн урати урлă ярса пуссанах тăван мар чĕлхепе – вырăсла – пуплеме пуçлаççĕ. Çакăн çинчен питĕ пăшăрханса каларĕ вăл. Тĕрĕс мар-и? Унăн тепĕр шухăшĕ: "Акă паян черетлĕ хутчен канашлăва пухăнса тăван чĕлхе çинчен калаçатăр. 20 çул темĕн сÿтсе яватăр, тĕрлĕ резолюци йышăнатăр. Вĕсене çыру мелĕпе влаçра тăракан тĕрлĕ инстанцие çитеретĕр те темĕн ырри кĕтме тытăнатăр. Çарта салтаксем командир хушăвне кĕтнине аса илтерет çакă. Ăнланăр, чĕлхене упраса хăварас тесен "çÿлтен" улшăну кĕтни кăна çителĕксĕр. Хăвăрăн шухăшлава улăштармалла. Хытса ларнă субъект пек мар, чăн-чăн граждансем пек шухăшлама пуçласамăр. Ăсчах калаçнă çак сăмахсемпе çĕр процент таранах килĕшме тивет. Тĕрĕс мар-и?

Резолюци тенĕрен, вĕсен спискĕ вара форум пĕтĕмлетĕвĕнче самаях вăрăм çырăнчĕ. Çÿлерех асăннă сĕнĕве – шкулсене 6 кунлăх вĕренÿ эрни çине куçассине, çапла майпа тăван чĕлхепе литература урокĕсен сехечĕсене туллин сыхласа хăварассине – пĕрремĕш вырăна лартрĕç. Резолюцисенче, тĕпрен илсен – шкул шайĕнче чĕлхене мĕнлерех аталантарса пырасси. Шкул үсĕмне çитменнисен организацийĕсенче, училищĕсенче, колледж-техникумра, аслă шкулсенче чăваш чĕлхине вĕренÿ планне кĕртсе вĕрентессине, çакна валли тивĕçлĕ программăсемпе методика литератури хатĕрлемеллине пайăррăн палăртрĕç. Ача сачĕсенчи воспитательсем валли чăваш чĕлхи вĕрентме пулăшакан курссем йĕркелемеллине, радиопа телекуравра ача-пăча валли хатĕрленĕ чăвашла кăларăмсен йышне ÿстермеллине асăнчĕç. Чăваш Енре янтăласа кăларакан юр-варпа ĕçме-çимене, географи объекчĕсене чăвашла ят парас ыйтăва та айккинче хăвармарĕç. Форум резолюцийĕнче кăтартнă ĕçсене пурнăçа кĕртме Чăваш Республикин бюджетне çирĕплетнĕ чухне уйрăм статья йĕркелесси çинчен те ыйтса çырчĕç канашлăва хутшăннисем.

Ан тив, çакă йăлтах çарти йĕркене аса илтерсен те – ырă улшăну-пусару пултăрччĕ.

■ **Ирина ПУШКИНА**

# Мĕнлерех куратпăр эпир тĕнчене?

## Коммерципе çыхăнман организацисен республикăри I форумĕ хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ

***Тĕнче анлăшĕнче Раççей вырăнне мĕнле куратăр? Влаçпа общество хушшинче килĕшÿлĕх пур-и? Наци хутшăнăвĕсене лайăхлатмалли майсем. Халăхăн чухăн сийĕсене пулăшмалли меслетсем. Çакă тата ытти ыйтăва сÿтсе яврĕç Чăваш Енре иртнĕ коммерципе çыхăнман организацисен пĕрремĕш форумĕнче.***

Ăна йĕркелесе ертсе пынă ЧР Общество палатин культура, вĕренÿ тата наци хутшăнăвĕсен комиссийĕн председателĕ Алексей Судленков форумăн ăнăçлăхне палăртрĕ. Тавлашу клубĕсемпе «çавра сĕтелсенче» паянхи пурнăç кăларса тăратнă чи çивĕч ыйтусене хускатнă. Тавлашнă çеç мар, хирĕçÿллĕ самантсене сирсе ямалли çул-йĕр сĕннĕ.

Шупашкара Мускавран паллă экспертсем – РФ Общество палатин членĕ Максим Григорьев, Раççейри Стратеги тĕпчевĕсен институчĕн ăсчахĕ Раис Сулейманов килни форум ĕçне çĕнĕ варкăш кĕртрĕ. «Тĕнчере тата хамăр çĕршывра пулса иртекен пулăмсене тĕрĕс хаклама вĕренсен эпир пурнăç таппинчен ÿксе юлмăпăр. Крым Раççей йышне кĕни тата Украинăри тытăçусем халăх чун-чĕрине хускатрĕç. Тĕрлĕ этнос хутшăнăвĕсене йĕркелессипе Чăваш Республики паха тĕслĕх кăтартать. Ытти регионта пултăм та унти лару-тăру кăткăсрах иккенне курса ĕнентĕм. Обществăра çураçу пулсан эпир кирек епле йывăр тапхăра та чиперех тÿссе ирттерĕпĕр», – çапла хак пачĕ анлă та тĕплĕ калаçăва Раççей Общество палатин членĕ Максим Григорьев.

Тĕрлĕ секцие ертсе пынă Пĕтĕм тĕнчери «Адвента» центрĕн пуçлăхĕ Дмитрий Донсков, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн аслă наука сотрудникĕ Иван Бойко, «Общество хăрушсăрлăхĕн центрĕн» ертÿçи Альберт Ильин тавлашусем уссăр иртменни çинчен каларĕç.

Форума хутшăннисене ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ырă сунчĕ:

– Влаç сирĕн сăмаха илтессе шансах тăратăп, – терĕ вăл. – Коммерципе çыхăнман организацисем гражданла обществăн никĕсне йĕркелеççĕ. Вĕсен шухăш-кăмăлне хамăрăн малашнехи ĕçре шута илмелле, ĕçлĕ сĕнÿсем нумай пани кăмăла кайрĕ. Эппин, паянхи ăру тĕнчери пулăмсенчен аякра тăмасть. Хам енчен çакна каласшăн: пирĕн республикăра килĕшÿлĕх хуçаланни кулленхи ыйтусене ăнăçлă татса пама пулăшать. Пĕтĕм ыйту экономикăна пырса тивет-çке. Çулталăка начар мар кăтартусемпе вĕçлетпĕр. Укçатенкĕ енĕпе йывăрлăх сиксе тухнине пăхмасăрах социаллă проектсене çул панă. Сăмахран, Çĕнĕ Шупашкарта икĕ çултан аслăраххисене ача сачĕпе тивĕçтерес ыйтăва пĕтĕмĕшпех татса патăмăр. Республикипе кăçал пурĕ 15 ача сачĕ хута каймалла. Юлашки виçĕ çулта ача çуратас туртăм вăйланни демографи процесне лайăх витĕм кÿрет. Сывă пурнăç йĕркине анлăрах сарма чĕнесшĕн эпĕ сире. Халăхăн 35-37 проценчĕ массăллă физкультурăпа туслашни пирĕншĕн чикĕ мар. Çак юхăма тата хăватлăрах курас килет пирĕн.

■ **Вячеслав ГРИГОРЬЕВ**

ЭНЕРГЕТИКА

# КЭС: плюс кăна – нимĕнле минус та!

КЭС ХОЛДИНГ
Волжская ТГК
Филиал «Марий Эл и Чувашии»
Реклама

***Çук, вĕçленчĕ теме иртерех-ха, çапах «КЭС» АХОн çĕнĕ стратегийĕпе килĕшÿллĕн энергетиксем чылайранпа «кирлĕ» текен çĕнĕйĕркелÿ сăнарланма пуçларĕ пулас. Декабрĕн 1-мĕшĕнче холдингăн генераци активĕсене пĕрлештересси официаллă майпа вĕçленнĕ.***

КЭСăн капитализацие пысăклатас тĕллевпе вертикаль мелĕпе пĕрлештерĕнĕ компани никĕсне туса хумалли çĕнĕ бизнес-стратегийĕпе кăçалхи май уйăхĕнче паллаштарнăччĕ. Холдинг ертÿçисем ун чух çапла пĕлтернĕччĕ: «Çак стратегие хатĕрленĕ чухне эпир ăшăпа тивĕçтерекен отрасльте – компанин тĕп бизнесĕнче – чылайранпа палăракан туртăмсене шута илтĕмĕр. Çав шутра – энергипе усă курассин ÿсĕмĕн хăвăртлăхĕ чакни, унăн тытăмĕ йăлари потребительсен енне сулăнни. Энергоресурссемпе ытларах пысăк хуласем усă курнă май компанишĕн вĕсем тĕп рынок пулса тăраççĕ. Çак рынокра конкуренцие парăнас мар тесен компани ĕçне çĕнĕлле йĕркелемелле. Активсене пĕтĕçтерни унăн тытăмне ансатлатма, управлени тăкакĕсене чакарма, операцисен тухăçлăхне ÿстерме май парĕ, çакă тĕп тата миноритарлă акционерсен интересĕсене тивĕçтерет».

Июнь вĕçĕнче Мускавра пĕрлештерекен компанисен акционерĕсен пухăвĕсенче çĕнĕйĕркелÿ тĕлĕшпе йышăну тунă. Генерацире çак улшăнусем «ТГК-5», «ТГК-6», «ТГК-9» тата «Оренбургри ТГК» АУОсене «Атăл тăрăхĕнчи ТГК» АУОпа /центрĕ – Самарта/ пĕрлештернĕ. Пĕрлешекен компанисене ЕГРЮЛтан кăларнин докуменчĕсем те пур ĕнтĕ, пĕтермелисемсĕр пуçне мĕнпур акцие Атăл тăрăхĕнчи ТГКн хушма акцийĕсене конвертациленĕ. Маларах, октябрĕн 1-мĕшĕнче, «КЭС-Энергосбыт» управленийĕнчи энергосбыт компанийĕсен çĕнĕйĕркелĕвĕ вĕçленнĕччĕ.

Холдинг тытăмĕ улшăнни вăл ĕçлекен регионсен шутне чакармасть. Компани паян та Раççейĕн 16 регионĕнче потребительсене энергипе унччен пекех тивĕçтерет. Унăн клиенчĕсем – 14 млн уйрăм çын тата юридици вăйĕнчи 160 пин ытла тытăм.

Çапах та, Чăваш Енри потребительсен – халăхăн, промышленноç предприятийĕсен – мĕн кĕтмелле? Холдингăн ăшă электростанцийĕсем Шупашкарти ăшăпа тивĕçтерекен тĕп тата Çĕнĕ Шупашкарти пĕртен-пĕр çăлкуç пулнă май ку ыйту, килĕшетĕр пуль, ячĕшĕн мар.

Хуравĕ ансат: потребительсем улшăнусене туймĕç. Генераци активĕсене çĕнĕлле йĕркеленĕ май компани филиалĕсен хăнăхнă тытăмĕ упранса юлать. Халĕ вĕсем пурте Атăл тăрăхĕнчи ТГК «çуначĕ» айĕнче – çакă çеç. «Калăпăр, «Мари Эл тата Чăваш Ен» филиал, унччен «ТГК-5» АУО подразделенийĕсенчен пĕри пулнăскер, халĕ Атăл тăрăхĕнчи ТГКн «Мари Эл тата Чăваш Ен» филиалĕ ятлă.

– Минуссем пулмаççех, – шантарчĕ хаçат корреспондентне филиал ертÿçи Юрий Цешковский. – Потребительсене паха энергоресурссемпе унченхи пекех шанчăклă тивĕçтерĕпĕр. Унччен территори генераци компанийĕсем «КЭС» АХО управленийĕнчи уйрăм юридици тытăмĕсен статусĕпе ĕçленĕ. Халĕ мĕнпур филиал Атăл тăрăхĕнчи ТГКпа пĕрлешрĕ, çакă, паллах, управлени схемине ансатлатать. Ку вара пирĕн ĕç пахалăхне ырă витĕм кÿмелле.

Сăмах станцисенче ăшăпа электричество производствинче тÿрремĕнех ĕçлекен, ăшă сечĕсене пăхса тăракан персонала чакарасси пирки пымасть. Управленири «ытлашши» сыпăка пĕтерекен оптимизаци вара, иккĕленмесĕр компанире, усă кăна кÿрĕ. Улшăнусем КЭС пурнăçлакан программăсемпе проектсене те пырса тивмĕç. Энергетиксем шантараççĕ: отрасльти чи пысăк инвестици программипе килĕшÿллĕн генераци хăвачĕсен паркне çĕнетесси малашне те тĕп вырăнта пулĕ.

Сăмах май, шăпах КЭСăн çĕнĕ стратегине пурнăçласа кăçалхи мартра Çĕнĕ Шупашкарти 3-мĕш ТЭЦра 80 МВт хăвачлă çĕнĕ турбоагрегата хута ячĕç. Ку – компанин çĕнĕ генераци строительствин анлă инвестици программинчи 18 проектран пĕри. Çĕршывăн чылай хулинче пурнăçлакан ГВС 2.0 программа вара холдинг хăйĕн клиенчĕсемшĕн ĕçленине куçкĕрет кăтартать: Çĕнĕ Шупашкарта вăл 2015 çултах вĕри шыва чармашкăн пăрахма май парĕ, Шупашкарта та кранра вĕри шыв çук кунсен шучĕ пĕчĕкленет. Республикăн тĕп хулинче филиал хăйĕн зонинче ăшăпа тивĕçтерекен пĕрлехи организаци /ЕТО/ статусне илчĕ, çакă та ĕç стандарчĕсене лайăхлатса пыма хистет.

Компанин тариф политики тĕлĕшпе те потребительсем холдинг çĕнĕйĕркелĕвĕпе çыхăннă «лайăх мар» улшăнусене кĕтни вырăнсăр. Мĕншĕн тесен ресурссемпе тивĕçтерекен организацисемшĕн, çав шутра энергокомпанисемшĕн тарифсене патшалăх çирĕплетет. Пирĕн тĕслĕхре – ЧР Конкуренци политикипе тарифсен патшалăх службиĕ. Тарифсен çулленхи ÿсĕмĕ инфляципе кăна шайлашать, ку енĕпе нимĕн те улшăнмасть.

Генераци компанийĕсене пĕтĕçтернипе çĕнĕйĕркелĕвĕн пĕрремĕш тапхăрĕ вĕçленчĕ. Малалла мĕн? Анлă улшăнусен тăсăмĕ – компанин фирма ячĕпе брендне улăштарасси. Атăл тăрăхĕнчи ТГК ятне улăштарать, «Т Плюс» компани пулса тăрать. Ку ыйтăва «Атăл тăрăхĕнчи ТГК» АУО акционерĕсен 2015 çулăн пĕрремĕш çуррине ирттмелли черетсĕр пухăвĕнче тишкерĕç.

Çĕнĕ ят çынсене ăшăпа çутă кÿрекен компанишĕн тарăн пĕлтерĕшлĕ. Унта тата логотипра КЭСăн йăлана кĕнĕ хаклăхĕсем сăнарланаççĕ: профессионализмпа компетентлăх, клиентсемшĕн ĕçлесси, инноваци çулĕпе аталанасси. «Т» саспалли – температура, унăн вара, чухларăр пуль, ялан плюслă пулмалла.

Çапах, «Атăл тăрăхĕнчи ТГК» АУОн «Мари Эл тата Чăваш Ен» филиалĕнче палăртнă тăрăх, «ятпа логотип – графика символĕ кăна. Компани сумĕпе хăватне çынсем, профессионалсем тăваççĕ – турбина машинисчĕнчен пуçласа ТЭЦ директорĕ таран». Энергокомпанин çĕнĕ бренчĕ мĕнлерех пĕлтерĕшпе туласси шăпах вĕсенчен килет. Вăл çынсен ыйтăвĕсене пысăк пахалăхпа татса парассипе, потребительсене ăшăпа, электричествăпа, вĕри шывпа тата пăспа тивĕçтерессин шанчăклăхĕпе тачă çыхăнасси пирки чăваш энергетикĕсем иккĕленмеççĕ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

САМАНА ТАППИ

# *Анатолий МОИСЕЕВ:* Тăван яла юратмаллах!

***Пуçарулăхĕпе, малашлăха курма пĕлнипе, сăмаха тытнипе палăрать вăл. Çав вăхăтрах çынсене пур енĕпе те тĕслĕх кăтартать. Çакнашкал ырă сăмахсем каласа паллаштарас килет манăн хамăр вулакансене Патăрьел ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Анатолий Моисеевпа. Маларах вăл «Красная поляна» хуçалăха, «Агрохимия» предприятие ертсе пынă.***

**– Çак пукан çинче хăвăра хăтлă туятăр-и? Килĕшет-и?**

– Тĕрĕссипе, сĕре килĕшет, мĕншĕн тесен питĕ йывăр. Эпĕ йывăрлăхпа кĕрешме юрататăп. 1983 çулта Чăваш патшалăх ял хуçалăх академине вĕренме кĕрсен спортпа туслашрăм. Вăл вара пурнăçра самай пулăшать. Спортра акă еплерех: кĕрешме йывăр, кĕрешÿçĕсем хăватлă, кавир çине пĕрре тухнипех çĕнтерейместĕн, тренировкăсене çÿремелле, çав йывăрлăхсене тÿссе ирттермелле. Çапла пире тренерсем пурнăçра усăллă пулма вĕрентрĕç пулĕ тетĕп. Халăха хÿтĕлекен çыннăн чăннипех вăйлă пулмалла. Çав вăхăтрах ăс-тăн енĕпе те, тавракурăмпа та. «Ку çынна шанма пулать!» – тесе пĕтĕмлетĕ вара халăх. Тĕрĕссипе, кăмăла килсен кашни сферăрах ĕçлеме интереслĕ.

**– Иртсе пыракан 2014 çул сирĕншĕн мĕнпе асра юлчĕ?**

– Лаша çулĕнче çуралнă пулин те маншăн та ку çулта йывăрлăх нумай пулчĕ. Политикăн та витĕмĕ самаях пулчĕ пулас. Кунашкал лару-тăрăва эпĕ салтак пурнăçĕпе танлаштаратăп. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче, авă, Ленинград çыннисем икĕ çул блокадăра пулнă. Пурăннă вĕт-ха çынсем, парăнман. Пĕр енчен эпĕ савăнатăп: политика кăларса тăратакан йывăрлăхсем çынна ĕçлеме вĕрентсе пыраççĕ. Тĕрĕсмарлăха сирсе, йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма тивет. Çавăнпа халĕ çав «блокадăран» тухрăмăр тесшĕн.

2014 çулта эпир культурăпа кану паркĕнче чылай ĕç турăмăр. Ăна хăтлама ятарлă конкурс ирттертĕмĕр. Сăрă ăстисем чылайăн хутшăнчĕç унта. Çĕнтерÿçисем вара калама çук чаплă палăк лартса пачĕç. Халĕ унашкалли ытти район центрĕнче те çукрах-ха. Тротуарсем сартăмăр, сцена майлаштартăмăр, саксем вырнаçтартăмăр, лăсăллă йывăçсем лартрăмăр. Парка эпир çитес çул октябрь уйăхĕнче савăнăçлă лару-тăрура уçма палăртатпăр. Çавăн пекех çамрăк çемьесемпе, çурт-йĕрпе çыхăннă мĕнпур программăна хутшăнатпăр. Енчен те районта Федераци, республика шайĕнчи 12 программа ĕçлет-тĕк – эпир пĕринчен те айккинче юлмастпăр. Район центрĕ тирпейлĕ, илемлĕ пултăр тетпĕр. Çав тĕллевпе муниципалитетăн унитари предприятине йĕркелерĕмĕр. Çулсеренех ятарлă техника туянатпăр. Пирĕн халĕ çулсене тасатаканни те, çÿпçап пуçтараканни те, тиекенни те, йывăç-тĕм тикĕслекенни те пур. Тротуарсем хĕлле те – çап-çутă, тап-таса.



**– Район центрĕн сăн-сăпачĕ улшăнсах пырать. Хăнасене кăтартмалли, чи хитре вырăнсем…**

– Эпĕ Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнче пулса курнă. Куçа тÿрех мĕн курăнать? Паллах, илем! Кашни ялăн хăйĕн сăнĕ. Пирĕн район центрĕнче кашни кĕтес илемлĕ тесе шутлатăп. Эпир хамăр ял тăрăхĕнче ача-пăча площадки çулсеренех икшер уçма палăртнă. Пĕрне нумай хутлă çуртсем патĕнче, теприне уйрăм çынсем пурăнакан урамсенче хăтлатпăр. Хăш урамра е картишре – депутатсемпе канашласа палăртатпăр. Çак ĕçе депутатсем хастар хутшăнни савăнтарать. Крепков тата Ленин урамĕсенче кăçал усăллă çĕнĕ площадкăсенче ача-пăча хĕвĕшет кăна. Нумай хутлă çуртсенче пурăнакан ача амăшĕсем хăйсем те питĕ пуçаруллă пулчĕç. Пĕлтĕр 12 метр çÿллĕш автовышка туянтăмăр. Халĕ кашни урамрах юпасем çинче çутă пур. Маларах Канаш урамĕ тĕттĕм вырăн пулнă тăк – халĕ унта та çап-çутă. Ленин урамĕнче, ав, энерги перекетлекен лампăсем вырнаçтартăмăр.

**– Çĕнĕ çула хатĕрленес ĕç-хĕл епле пырать?**

– Пирĕн район шайĕнче «Çутă пултăр яланах!» /«Да будет свет!»/ конкурс иртет. Эпир унта та хастар хутшăнатпăр. Халлĕхе Патăрьелте 2-3 çĕрте кăна чăрăша капăрлатнăччĕ-ха, çитес вăхăтра вĕсем ытларах пулĕç.

**– Халĕ кашни район центрĕнчех спорт комплексĕ пур. Калăр-ха, сирĕн халăх унта çÿрет-и?**

– Хам эпĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕн хăйĕн пур енĕпе те тĕслĕх кăтартмаллине шута илсе ирхине зарядка тăватăп, ĕçе çуран çÿретĕп. Спортзала çитсе килме те вăхăт тупатăп. Унта эпир ирĕклĕ мелпе кĕрешес енĕпе икĕ ушкăн /аслисемпе кĕçĕннисен/ йĕркелерĕмĕр. Футболла та вылятпăр, кĕрешетпĕр те. Бассейна та, ытти çĕре те халăх чăннипех питĕ йышлă çÿрет. 2011 çулта эпир урамсен хушшинче мини-футболла выляс енĕпе ăмăртусем йĕркелеме тытăнтăмăр. Кашни касшăн, урамшăн депутатсем яваплă. Волейболла выляс енĕпе те вăй виçетпĕр. Сăмах май, Патăрьел ял тăрăхĕн администрацийĕнче ĕçлекенсем /пурĕ 9 çын/ пурте физкультура комплексне çÿреççĕ. Вĕсем ăмăртусенче те яланах малтисен йышĕнче.

**– Анатолий Федорович, яла юлнăшăн кулянмастăр-и? Тен, хулара пысăкрах çитĕнÿ кĕтетчĕ сире?**

– Хăй вăхăтĕнче эпĕ хулана кайса вырнаçнăччĕ ĕнтĕ. Маларах аслă шкулта вĕреннĕ, унтан ШĔМ тытăмĕнче ĕçленĕ. Пирĕн атте 46 çулта чухнех пурнăçран уйрăлчĕ, унтан аннене те юлашки çула ăсатма тиврĕ. Йăмăксемпе шăллăмсем пĕчĕкчĕ. Чунăм кил еннелле туртăнма тытăнчĕ. Çапла, шăпам тăван тăрăхах илсе çитерчĕ. Уншăн халĕ нимĕн чухлĕ те ÿкĕнместĕп. Тăван яла юратмаллах, мĕншĕн тесен тăван ял та сана савать, сансăр тунсăхлать.

**– 2015 çултан мĕн кĕтетĕр?**

– Паллах, ыррине çеç. Качака çулĕ Лаша çулталăкĕнчен лайăхрах пулассăн туйăнать. 2015 çул валли палăртни чылай, йăлтах пурнăçа кĕртесчĕ.

■ **Роза ВЛАСОВА.**

Автор сăнÿкерчĕкĕ

ХЫПАР



# «Мунчара яланах икĕ мăшăр милĕк пĕçеретпĕр»

## Пирĕн сĕтел çинче паха çимĕç кăна

*Унăн кил-çуртĕнче пур çĕрте тирпейпе илем хуçаланать. Картишре те, лупас айĕнче те, çуллахи кухньăра та, выльăх апачĕ хатĕрлекен вырăнта та, пĕчĕк пӳртре те... калама çук хăтлă. Куçшăн та илем, чуншăн та хĕпĕртев. Ахальтен мар вăл «Чи тирпейлĕ кил-çурт» ята тивĕçнĕ. Сăмахăм Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăршăра пурăнакан Елена Федорова пирки. Елена Никандровнăн кермене, чăн та, хулари хваттертен те капăртарах. Чаплă йышши сĕтел-пукан, гарнитур, тĕрленĕ тата ахаль картинăсем илем кӳреççĕ ку киле. Ял çыннисем те паян хăтлă пурăнма вĕренсе çитрĕç.*



● *Елена Федорова чее яланах сиплĕ курăкран вĕретет.*

Елена Федорова питĕ хăйне евĕр, ĕçчен те сăпай хĕрарăм. Сакăр çул каялла вăл юратнă мăшăрĕсĕр тăрса юлнă. Йывăр чир Игорь Аркадьевича çывăх çыннисенчен вăхăтсăр уйăрнă. Ывăлĕсем Алексейпа Андрей Мускавра ĕçлесе пурăнаççĕ. Наташа вара Шупашкарти коопераци институтĕнче пĕлӳ илет. Канмалли кунсенче, уявсенче ачисем тăван киле килессе чăтăмсăррăн кĕтет «вучаха» упракан хĕрарăм. Сăнӳкерчĕксен альбомне уçкаланă май Елена Никандровна пурнăç çулне аса илчĕ. Ăна, хуп-хура çӳçлĕ, тăпăлтăпăл кĕлеткеллĕ чиперккене, пĕр ял каччи Игорь пĕчĕкренех куç хывнă. Салтакран килсен вара хăй калашле «утма та паман», тӳрех качча илнĕ. Пĕркенчĕк айне тăнă чухне Елена вунсаккăрта кăна пулнă. Вăл шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Шăмăршăри вăрман хуçалăхĕнче ĕçленĕ. Пĕр тапхăр вăрман хуçалăхĕн столовăйĕнче вăй хунă. Унтан лесопункта куçнă. Унта вара 2003 çулччен тăрăшнă. Юратнă мăшăрĕ юнашар пулни хавхалантарнă, çунат хуштарнă ăна. Ăна аса илсенех куçĕсем шывланаççĕ унăн. «Питĕ килĕштернĕ эпир пĕр-пĕрне. Сĕре лайăх çынччĕ вăл, мĕн каланине йăлт итлетчĕ. Пĕрле пурăннă виçĕ теçетке çул хушшинче пĕрре те сивĕ сăмах каласа кӳрентермен... Малтанах пĕчченлĕхе ниепле те хăнăхаймастăмччĕ. Тунсăхччĕ, чунăм макăратчĕ. Çулла атя ĕçпе чуна пусараттăмччĕ. Анчах хĕле кĕресрен сехре хăпса тухатчĕ. Вăл вилнине чунăм халĕ те йышăнасшăн мар. Алăк хальхаль уçăлассăн, Игорь пырса кĕрессĕн туйăнать. Больницăна выртма кайнă пек кăна туйăнать. Юрать ачасем çитĕнсе, ура çине тăрса юлчĕç. Ывăлсем халĕ йăмăкне пулăшаççĕ. Çулла вăрмана чупатăп: çырла, кăмпа татаtăп, милĕк, шăпăр хатĕрлетĕп. Вĕсене сутлăх та янтăлатăп. Вăй-хăват çитнĕ таран выльăх-чĕрлĕх усратăп. Кĕтĕве каякан çукипе ĕне тытма пăрахрăм. Ун вырăнне – картиш тулли хур-кăвакал, чăх-чĕп, сысна. Ачасене какай кирлĕ, эпĕ лавккаран пельмень, катлет, кăлпасси пĕрре те туянмастăп. Килти какайран темĕн тĕрлĕ апат-çимĕç те хатĕрлетĕп. Лавкка çимĕçне юратнăранах паян самăр çын питĕ нумай. Манăн шухăшăмпа, вĕсен йышĕ тепĕр темиçе çулран тата та хушăнать. Эпир вара таса çимене кăна ас тивме тăрăшатпăр. Хĕле валли пахча çимĕç чылай маринадлатăп, тăварлатăп. Ĕнер ав купăста йӳçĕтрĕм. Çавăн пекех эпĕ пĕчĕк пахчара çĕр çырли /виктори/ чылай туса илетĕп. Авалхи сортах пулин те, питĕ пылак вăл. Ăна хĕлле валли шăнтса хуратăп. Çулла йышпа машинăпах хура çырла татма каятпăр. Çывăхра çукрах вăл, Кучек патнех çитме тивет. Хура çырларан варени те пĕçеретĕп, компот та хупатăп. Ытлашшине сутатăп. Милĕке те аякка кайма тивет. Çу каçа хурăн, юман милĕкĕсене 100 ытла мăшăр та янтăлатăп. Халĕ те нумай-ха сутмалли. Эпĕ çынсем пек асфальт хĕрне тухмастăп, тутарсем хăйсемех киле килсе туянаççĕ. Милĕке тăпăл-тăпăл, тирпейлĕ тума тăрăшатăп. Лăпăс-лăпăса, йывăррине тиркеççĕ вĕсем. «Санăн милĕкне юрататпăр»,– теççĕ мана Шăнкăртамсем /Патăрьел районĕ/. Асăннă ялти мишер арăмĕсемпе – Фаридапа тата Гелияпа – сĕре туслă эпĕ. «Кăмпу пур-и, шăпăру пур-и?» – тесе кăна тăраççĕ хайхисем. Мана вара вĕсем Лина тесе чĕнеççĕ. Сăмах май, пĕр мăшăр милĕк паян 50 тенкĕ тăрать. Хамăр вара кашни мунчара икшер мăшăр милĕк пĕçеретпĕр. Эпĕ те, ачасем те çапăнма кăмăллатпăр. Хурăнран тунă милĕке ытларах юрататпăр. Юманран хатĕрлени вара чĕрепе чирлисемшĕн сиплĕ»,– вăрттăнлăха усрĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.

> ✓ ЭПĔ ЛАВККАРАН ПЕЛЬМЕНЬ, КАТЛЕТ, КĂЛПАССИ ПĔРРЕ ТЕ ТУЯНМАСТĂП. КИЛТИ КАКАЙРАН ТЕМĔН ТĔРЛĔ АПАТ-ÇИМĔÇ ТЕ ХАТĔРЛЕТĔП. ЛАВККА ÇИМĔÇНЕ ЮРАТНĂРАНАХ ПАЯН САМĂР ÇЫН ПИТĔ НУМАЙ. МАНĂН ШУХĂШĂМПА, ВĔСЕН ЙЫШĔ ТЕПĔР ТЕМИÇЕ ÇУЛРАН ТАТА ТА ХУШĂНАТЬ

Елена Никандровна, мĕн ачаран çутçанталăка, тăван тăрăха, вăрмана юратса ӳснĕскер, çырла, кăмпа, сиплĕ курăк вырăнĕсене никамран лайăх тĕшмĕртет. «Вăрман пуянлăхĕ вара такама валли те çитет»,– тет. Кăмпа ытларах хырлăхра, кӳлĕ е шурлăх çывăхĕнче чылай-мĕн. «Кăçал тунката кăмпи сахалрах пулчĕ, мăнтăр кăмпа, кăрăç, хурăн кăмпи чылайччĕ. Икĕ витре сарă кăмпа татрăм. Хăш-пĕри яка кăмпана /сыроежка/ тапа-тапа иртет, эпĕ вара ăна пухатăп, пĕçерсе сивĕтмĕше хуратăп. Кайран ăшаласа çиме аван, тăварласан та тутлă вăл»,– ăс парать кăмпаçă. Елена Федорова халĕ вăхăта алĕç туса, хаçат-журнал вуласа, телевизор пăхса ирттерет. «Хулара пĕр кун та тăраймастăп, ялах килĕштеретĕп»,– чунне уçать манăн çĕнĕ пĕлĕшĕм. Ачисене вара яланах кукăль пĕçерсе кĕтсе илет...

■ **Роза ВЛАСОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ

СУНАР

# Аукционсем – кĕр-кĕрр!.. Мĕншĕн?

## Кайăкçă лаптăкĕсемшĕн

*2010 çулччен саккуна пăсса валеçнĕ кайăкçă вырăнĕсене ЧР Арбитраж сучĕ арендаторсенчен туртса илнине «Хыпар» пĕлтернĕччĕ. Çывăх вăхăтра вĕсене каллех тара парĕç. Ку ĕçе мĕнле пурнăçласшăн-ха? ЧР чĕрчун тĕнчин объекчĕсемпе вĕсем пурăнакан çĕре сыхлас, тĕрĕслес тата чĕрлĕхпе усă курассине йĕркелес енĕпе ĕçлекен патшалăх службин ертӳçи Владимир КУЗЮКОВ хуравлать.*

– Нумаях пулмасть пĕрремĕш аукцион иртрĕ, – тет Владимир Николаевич. – Етĕрне районĕнчи Сучково сунар лапкăшне 49 çула тара пама палăртатпăр. Унăн аукционччен пĕлтернĕ хакĕ – 82 пин тенкĕ. Кĕмĕл пĕтĕмпех федераци хыснине кайĕ, асăннă хутлăхра сунар хуçалăхĕ ĕçлеме пуçласан республика бюджетне налук куçса тăрĕ. Аукциона юридицин 11 сăпачĕ, вăл шутра Самарти «Дрофа» общество та, хутшăнчĕ. Бюджета 10 млн тенкĕ ытла хывма шантарса çĕнтерчĕ. Декабрĕн 18-мĕшĕччен çав укçана хывмасан служба обществăпа килĕшӳ тумĕ.

**– Суд сунар вырăнĕсене мĕншĕн салатнине аса илеймĕр-и?**

– Службăн ун чухнехи ертӳлĕхĕ вĕсене арендаторсене тара парассине информацин йышлă хатĕрĕнче малтан пĕлтермесĕрех валеçсе саккуна пăснă. Эпир ăна çирĕп пăхăнатпăр. Аукцион йĕркелессине Раççей тата республика шайĕнчи сайтра саккунра палăртнă вăхăтра хыпарларăмăр. Унта хутшăнас текенсем пирĕн специалистсемпе кирек хăçан та калаçма пултараççĕ. Хаклашупа çыхăннă пур ыйтăва та служба сайтĕнче хуравланă.

**– Арендаторсенчен туртса илнĕ лаптăксене мĕншĕн тепĕр хут çийĕнчех валеçмен?**

– Саккунпа килĕшӳллĕн вĕсене тепĕр хут шанса париччен Миас хулинчи Урал экологи компанине сунар лапкăшĕсене палăртмалли, вĕсене сыхламалли, кайăкçă объекчĕсемпе усă курмалли схема тутартăмăр, ăна Раççей Çутçанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствинче çирĕплеттертĕмĕр. Çак ĕçе пурнăçласа çулталăк ытла иртрĕ.

**– Ӳлĕм кайăкçă лаптăкĕ миçе пулĕ?**

– Суд йышăну кăлариччен 50 ытлаччĕ, халĕ – 25. Аукционсем йĕркеллĕ вĕçленсен тата 17 хушăнĕ, пурĕ 42 пуласса шанатпăр. Арендаторсем республикăри сунар вырăнĕсен 70 проценчĕпе усă курĕç. 30 процентне тара памастпăр. Çак лаптăкра кашни кайăкçăна сунарта çӳреме ирĕк паратпăр. Арендаторсен лаптăкĕнче чĕрчун тытнăшăн ăна тара илнĕ организацие, иккĕмĕшĕнче патшалăха укçа тӳлемелле. Иккĕмĕш аукционăн Вăрнар районĕнчи сунар вырăнĕн арендаторне палăртмаллаччĕ. Анчах унта çӳлерех асăннă «Дрофа» общество та хутшăнма кăмăл турĕ, федераци бюджетне 1,5 млн тенкĕ хывма шантарса çĕнтерчĕ. Эпир кӳршĕ регионсен чĕрчун тĕнчине хӳтĕлекен службисемпе телефонпа çыхăнса вăл 10 ытла субъектра сунар вырăнне тара илессишĕн аукциона хутшăнса çĕнтернине, анчах пĕр службăпа та чĕрчун ĕрчетесси пирки килĕшӳ çирĕплетменнине пĕлтĕмĕр. Общество аукцион иртнĕ хыççăн икĕ эрне хушшинче çав укçана хыснана куçармасан служба унпа килĕшӳ тумĕ. Аукционра иккĕмĕш вырăн йышăннă организаци ертӳçисемпе ăна çирĕплетесси пирки калаçăпăр.

**– Иртнĕ çулсенче арендаторсенчен хăшĕ-пĕри чĕрчуна ĕрчетессипе, вĕсене тытма май туса парассипе, туризма йĕркелессипе начар ĕçлерĕ. Сунар вырăнĕ çĕнĕ арендаторсемшĕн те çемйине, тустантăшне, бизнесри ĕçтешĕсене канмалли вырăн кăна пулса тăмĕши?**

– Уйрăм çынсене çеç ырлăх кăтартмăпăр. Сунар лаптăкĕсем – Раççей Федерацийĕн харпăрлăхĕ. Вĕсенче сунар объекчĕ шутланакан чĕрчунсене ĕрчетме, республикăра пурăнакансемшĕн кану вырăнĕ тума, вĕсемпе сунарçăсене усă курма парăпăр. Çак тĕллеве пурнăçламасан, эпир асăрхаттарнине шута илмесен лаптăка суд йышăнăвĕпе туртса илĕпĕр.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**
**калаçнă**

# Çĕр чăнах та çавракa иккен,

## е Паллă тележурналист Дмитрий Киселев – чăнах та Чăваш халăх писателĕн П.Н.Осиповăн çывăх тăванĕ!



*Мĕн, хисеплĕ Вулаканăм, малтанах ĕненменччĕ-им «Хыпар» пуçласа пĕлтернĕ çак хыпара? Ĕненмен, паллах. Çырăнтару тапхăрĕнчи черетлĕ «информаци кăвакалĕ» тесе шутланă... Кăвакал вăл, паллах, шутсăр паха вĕçенкайăк /уйрăмах сарлака сĕтел çинче ытти çимĕçпе пĕрле тутлă шăршă кăларса выртнă чух/. Анчах та хальхинче сăмах «кăвакал» пирки пымасть. Хальхинче эпĕ сана, вулаканăм, ЧĂН ПУЛНИНЕ каласа кăтартăп.*

Кăçалхи апрелĕн 17-мĕшĕнче /хам çак асар-писер тĕнчене килнĕ кун/ эпĕ Мускавра пултăм, Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В.В.Путин çулсерен телекуравра ирттерекен «тӳрĕ эфира» хутшăнтăм. Владимир Владимировичпа эпир, Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пухăннăскерсем, Тăван çĕршывăмăрăн тĕп хулин варрине /Кремльпе юнашар/ вырнаçнă «Гостиный двор» текен асар-писер пысăк комплексра ятарласа йĕркеленĕ телестудире тĕлпултăмăр. Паллă ĕнтĕ – çĕршыв ертӳçипе тĕлпулма пире «тӳрĕ эфир» пуçланиччен чылай маларах илсе çитерчĕç, кам ăçта, хăш секторта, ларассине пĕлтерчĕç, мелле самант тупăнсан Президентăмăра хамăра уйрăмах хумхантаракан ыйтăва пама сĕнчĕç. Ыйту тенĕрен... Май килсен В.В.Путина мĕнле ыйту парасси пирки эп, паллах, малтанах палăртса хунăччĕ – юлашки вăхăтра пире, Атăл тăрăхĕнче пурăнакансене, уйрăмах Шупашкар ГЭСĕн пуласлăхĕ пăшăрхантарать-шухăшлаттарать.

Акă ĕнтĕ, эпир, вĕçĕ-хĕррисĕр Раççейĕмĕрĕн «провинцийĕсенчен» пуçтарăннисем, хамăра уйăрса панă секторсене вырнаçса ларма пикентĕмĕр. Вырăнĕсем, тав Турра, пурин валли те çитеççĕ. Анчах та вĕсенчен хăшĕ-пĕри çине «Резерв» тесе çырса хунă, çырса хунине скотчпа çирĕплетнĕ.

Кăшт вăхăт иртсен залра Раççейĕпе те тĕнчипе паллă çынсем курăнма пикенчĕç: Михаил Боярский, Анатолий Карпов, Константин Райкин, Ирина Хакамада, «Хирург» текен байкер /ăна, вăрăм çӳçлĕ, вăрăм сухаллăскере, ыттисенчен тӳрех уйăратăн/ тата ыттисем те. **Акă зала «хыт утăмлăн» утса «Россия» телеканалпа халăх тăтăш куракан питĕ паллă тележурналист, «Россия сегодня» информаци агентствин генеральнăй директорĕ Дмитриев КИСЕЛЕВ кĕчĕ.** Ун патне тӳрех ик-виç çын чупса пычĕ, сывлăх сунчĕ. Унтан Дмитрий Константиновича... манпа юнашар «Резерв» тесе çырса хунă пукан çине ларма сĕнчĕç. Вăл, паллах, турткаланса тăмарĕ /ара, Туркайпа юнашар ларма кам хирĕç пултăр!/



Д.Киселев, куратăп-туятăп, пит лăпках мар – «Россия» телерадиокомпанин телекамерисем ăçтарах тата еплерех вырнаçни кăсăклантарать пулас ăна: çапах та «Тӳрĕ эфирта» Раççей Президенчĕ В.В.Путин ХĂЙ-çке-ха! Кунта такам та хумханĕ!..

– Дмитрий, – терĕм эпĕ вăл кăшт лăплансан, меллĕ самант тупса, – Сирĕнпе паллашма юрать-и?

– Паллах! – терĕ ман кӳршĕм йăл кулса та аллине ман еннелле тăсса.

Эп ăна пĕр-ик сăмахпа тенĕ пек хам çинчен каласа патăм.

– Шупашкартан?! – тет телекуравçă, каллех йăл кулса та кăштах тĕлĕнсе. – Манăн чи çывăх тăвансенчен пĕри – чăваш театрне йĕркеленĕ çынсенчен пĕри.

Пытармастăп, ĕç-пуçсем кун пек аталанассине пач кĕтменскер эпĕ пĕр хушă шалт аптăрарăм, çав вăхăтрах Чăваш театрне йĕркеленĕ çынсене аса илме пуçларăм. Тата театрĕсем те пирĕн пĕрре кăна мар-ха та...

– Максимов-Кошкинский е Борис Марков мар пуль? – тетĕп хам самаях аптăранине пытармасăр.

– Çук, – тет татăклăн Киселев юлташ, – Петр Николаевич Осипов!

ПЕТР НИКОЛАЕВИЧ ОСИПОВ?! Пĕтĕм чăваш халăхĕ чунтан юратнă, халĕ те юратакан Петр Николаевич Осипов – тĕнчипе паллă Дмитрий Киселев тележурналистăн çывăх тăванĕ?! Çук, çук, мĕскер эсир – кун пекки пулма пултараймасть!

Пулма пултарать иккен. Çĕр чăнах та çаврака иккен.

Дмитрий Константинович çирĕплетнĕ тăрăх вăл иккĕревиççĕре чухнех Петр Николаевич Осиповăн чĕрçи çинчевилĕмсĕр Шелепилле калас-тăк – «хĕвел шевли пек йăлт-йăлт сикнĕ», чăвашсен паллăран та паллă прозаикĕ, драматургĕ, музыканчĕ, актерĕ, тухтăрĕ тата Чăваш театрне йĕркеленĕ Улăпсенчен пĕри пĕчĕк Димăна питĕ юратнă, тутлă çимĕçсемпе сăйланă.

Çакă пĕтĕмпех мĕнле çыхăннă-и? Дмитрий Киселев çирĕплетнĕ тăрăх, унăн ашшĕпе Петр Николаевич Осиповăн мăшăрĕ – ПĔРТĂВАНСЕМ!

Акă еплерех çыхăннă Дмитрий Киселев Чăваш Енпе, чăваш халăхĕпе!

Паллах, В.В.Путин «тӳрĕ эфира» тухас умĕн эпир Дмитрий Константиновичпа 5-6 минут çеç калаçма пултартăмăр. Çапах та çак хушăра П.Н.Осиповăн юратнă мăшăрне те, сумлăран та сумлă ачисене те /вĕсем иккĕшĕ те – питĕ паллă тухтăрсем/ аса илме ĕлкĕртĕмĕр. Эпĕ хам енчен Дмитрий Константиновича чăваш халăхĕ хăйĕн мухтавлă, пур енĕпе те талантлă ывăлне халĕ те чунтан юратнине, аслă çыравçăвăмăрăн сăваплă ятне асран яманнине пĕлтертĕм, вăл 80 çул тултарнă кун Чăваш АССР Писательсен союзĕн ятарлă делегацийĕпе пĕрле /эп ун чухне çав кантурта ĕçлеттĕм/ юбиляра ăшшăн саламлама ун хваттерне /вăл анлă Атăл хĕрринчи К.В.Иванов скверĕнчи çуртра вырнаçнă, халĕ те çавăнтах/ еплерех çитсе килнине аса илтĕм.

«Тӳрĕ эфир» вăхăтĕнче Д.К.Киселев çĕршывăмăрăн ертӳçине пысăк пĕлтерĕшлĕ, нумай çынна хумхантаракан ыйту пачĕ. Унтан вăл хăйĕн журналисчĕсем патневаскарĕ, эпĕ – хамăн тусăмсем патне. Пуçланă калаçăва ун чухне малалла тăсаймарăмăр. Анчах та шансах тăратăп – КУ ТЕМĂНА «Хыпар» хускатрĕ кăна-ха. Дмитрий Киселев пире Петр Николаевич Осиповпа унăн туслă çемйи, хăйĕн ачалăхĕ çинчен халиччен никам та пĕлменнине, никам та илтменнине каласа паратех. Шурă Шупашкара та килсе курĕ-ха чăваш халăхĕн паллă та питĕ пултаруллă хурăнташĕ Дмитрий Киселев.

■ **Валери ТУРКАЙ**

АХРĂМ

# Шуршăл кинĕ кăна...

*«Хыпар» хаçатăн декабрь уйăхĕн 9-мĕшĕнчи номерĕнче пичетленнĕ «Валентина Терешкова чăваш халăхĕн кинĕ-и?..» статья чăннипех тарăн шухăша ячĕ.*

Тĕнче уçлăхне чи малтан Юрий Гагарин вĕçсе хăпарнă кун асăмра юлнă паллах. Пире, пуçламăш класра вĕренекенсене, ун чухне каникула янăччĕ. Çурхи шыв юххипе хут кимĕ иштерекенскерсем, космос карапне вĕçтерсе яни пирки пĕлсен /«космос» сăмах пĕлтерĕшне чухласах каймасан та/ самаях çуйхашнăччĕ. Андриан Николаев виççĕмĕш космонавт пулса тăрсан ӳсĕме кура мар мăнаçланнăччĕ. Ентешĕмĕр Валентина Терешковăпа пĕрлешнĕ текен хыпар та хăлхана кĕмесĕр юлман.

Тĕрĕссипе, тĕнчери пĕрремĕш космонавт хĕрарăма эпĕ телевизорпа кăна курнă, ун пирки радиопа пĕлтернине итленĕ. Тĕлпулса калаçмасăр, хутшăнмасăр çынна, çав шутра космос паттăрне те, хаклама çук. Тата, манăн тĕшмĕртĕве ыттисем йышăнмасан та пултараççĕ.

Несĕлĕмĕрсен йăли-йĕркине тĕпе хурса чăваш халăхĕ вырăс хĕрне кин тесе йышăннă пулсан та Валентина Терешкова хăйне Шуршăл кинĕ вырăнне кăна хунă пек туйăнать. Андриана юратса качча тухни иккĕлентермест паллах. Тĕнчипех палăрнăскере килĕштерекен, мăшăр тума хатĕр ар пулман мар, вăл вара чăваш каччине суйласа илнĕ, ача çуратса йăха малалла тăснă. Тĕнче уçлăхне парăнтарнă çăлтăр çапах та мăнкăмăллăхпа палăрса тăнă ахăр: 1963 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнче туй туса пĕрлешнĕ хыççăн упăшкин тăван енне çĕнĕ мăшăр тепĕр çулхи март уйăхĕнче кăна килсе каймашкăн вăхăт тупнă вĕт. Нивушлĕ унччен ерçеймен?

Мăшăр хушшинче чашăк-кашăк шăнкăртатмасăр пулмасть паллах. Пурăна-киле пурнăç хаклавĕ улшăнатех, уйрăмах тĕнчипе палăрнă çăлтăрсен. Вĕсем тĕрлĕ наци çынни пулнин, ӳсĕм енĕпе уйрăмлăх пысăккин витĕмĕ çук мар. Апла тăк пĕрле такăрланă сукмак вăхăт иртнĕ май икке пайланнинчен тĕлĕнмелли çук.

Хăй вăхăтĕнче Шуршăл кинĕ шутланнăскер, мăшăрĕнчен уйрăлсан Чăваш Енпе тытакан çыхăнăва кăна мар, тăванлăх хутшăнăвне татни те шухăшлаттарать.

Вунă çул каялла чăваш халăхĕ хăйĕн мухтавлă ывăлне Андриана юлашки çула ăсатнă чухне несĕлĕмĕрсен ламран-лама куçакан йăли-йĕркипе тупăк умĕнче унăн тăмаллаччĕ. Çемье вучахне пĕрле ăшăтса тăма хал çитерейменнине пăхмасăр, пĕртен-пĕр тĕпренчĕкĕн ашшĕпе ĕмĕрлĕх сывпуллашмаллаччĕ. Вăл вара çапла тумашкăн ерçӳ тупаймарĕ е тупас темерĕ.

Чăн та, мĕншĕн килмест-ха вăл пирĕн хутлăха?

■ **Валентина МИХАЙЛОВА.**
Шупашкар районĕ

# Çĕнĕ çул парни

ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи ачасен правине хӳтĕлекен уполномоченнăй йĕркеленипе ирттерекен «Çĕн раççейри елка» ыркăмăллăх акцине хутшăнса Донецк тата Луганск Халăх Республикисен çул çитмен çамрăкĕсем валли тумтир, атă-пушмак, тетте, канцтавар, пылак çимĕç пухнă. Парнесене асăннă тытăмăн çемьесемпе ачасене социаллă пулăшупа тивĕçтерекен учрежденисем хатĕрленĕ.

Сăваплă акцие çавăн пекех ЧР Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерстви те сумлă тӳпе хывнă. Республикăри хĕрарăмсен канашĕн Ыркăмăллăх фончĕ Çĕн раççей ачисене Çĕнĕ çул парнипе савăнтармашкăн çемçе теттесем, пуканесем, вылямалли машинăсем, конструктор пуххисем тата «АККОНД» АУО фабрикăн канфечĕсене туяннă.

«Çĕн раççейри елка» парнисене Мускава ярса памашкăн Чăваш Республикинчи ачасен правине хӳтĕлекен уполномоченнăй патне çитернĕ.

**В.СМИРНОВА.**

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА декабрь, 15-21

## 15 тунтикун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.00, 3.00 Новости
9.15, 4.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Сегодня вечером» 16+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 2.45, 3.05 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «МАЖОР» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 «Познер» 16+
1.15 Т/с «ВЕГАС» 16+
3.40 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Небесный щит»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПО ГОРЯЧИМ СЛЕДАМ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ-14» 12+
0.45 «Химия нашего тела. Витамины»
1.50 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧТВ

**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### Россия К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.15 Новости культуры
10.15, 1.40 «Наблюдатель»
11.15 Х/ф «АНТОН ИВАНОВИЧ СЕРДИТСЯ»
12.35 Д/ф «Андреич»
13.05, 22.45 Д/с «Апостолы». «Мария Магдалина»
13.35 Х/ф «ОТКРЫТАЯ КНИГА»
14.40, 17.20, 2.35 «Мировые сокровища культуры»
15.10 Academia
16.00 Д/ф «Город №2 (город Курчатов)»
16.40 Д/ф «Жар-птица Ивана Билибина»
17.35 «Декабрьские вечера. Избранное»
18.20 Д/ф «Камиль Писсарро»
18.30 «Те, с которыми я... Динара Асанова»
19.15 Главная роль
19.30 «Сати. Нескучная классика...»
20.10 Д/ф «Александр Столетов. Первый физик России»
20.50 «Спокойной ночи, малыши!»
21.05 «Правила жизни»
21.30 Д/с «Рассекреченная история». «Трагедия плена»
22.00 «Тем временем»
23.35 Д/ф «Мама». «Прощенный день»
0.45 Д/ф «Юл Бриннер. Душа бродяги»
1.30 Ф. Шопен. Баллада №1. Исполняет Ф. Кемпф

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.25 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.30 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.20, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00 Т/с «БРАТАНЫ» 16+
23.00 «Анатомия дня»
23.55 Т/с «ЧЕЛОВЕК НИОТКУДА» 16+
1.45 «ДНК» 16+
2.50 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ОДИН ПРОТИВ ВСЕХ» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.20 Х/ф «ТРИ ДНЯ НА РАЗМЫШЛЕНИЕ» 12+
10.55 «Доктор И...» 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 «Постскриптум» 16+
12.50 «В центре событий» 16+
13.55 «Осторожно, мошенники! 16+
14.50, 19.30 Город новостей
15.15 Городское собрание 12+
16.05, 17.55 Х/ф «ЧИСТО АНГЛИЙСКОЕ УБИЙСТВО» 12+
18.20 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «ВИКТОРИЯ» 16+
21.45, 1.30 Петровка, 38 16+
22.30 «Оружие вежливых людей» 16+
23.05 Без обмана. «Криминальный паштет» 16+
0.00 События. 25-й час
0.30 «Футбольный центр»
1.00 «Мозговой штурм. Чем опасен спайс?» 12+
1.45 Х/ф «ВРЕМЯ СЧАСТЬЯ» 16+
3.25 Х/ф «ЭМИГРАНТ» 16+

### РЕН

5.00 «Территория заблуждений» 16+
6.00, 18.00 «Верное средство» 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
7.30, 13.00 Званый ужин 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Военная тайна» 16+
11.00 Д/ф «Вселенная» 16+
14.00 «Засуди меня» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
20.00, 0.00 Х/ф «ГЛУБОКОЕ СИНЕЕ МОРЕ» 16+
22.00, 23.30 «Смотреть всем!» 16+
2.00 Х/ф «ПЕРЕГОН» 16+

### Чăваш Наци телекуравĕ

06.00 "Игра по правилам и без". И.Кобзон /12+/
07.00 М/ф «Маленький рыжик» /6+/
07.30, 17.30 Т/с «Чужие тайны» /16+/
08.30 «Спросите доктора» /12+/
09.30 Х/ф «Не ждали, не гадали» /12+/
11.30 Д/ф «Скажи, что не так» /16+/
12.30 «Час суда» /16+/
13.30 М/с «Золушка» /12+/
14.00 «Любовь и власть Раисы Горбачевой» /12+/
15.00 Т/с «С Новым счастьем» /16+/
16.00 Д/ф «Люди РФ» /12+/
16.30 Д/ф «Наша марка» /12+/
17.00 М/ф "Малиновка и медведь" /6+/
18.30, 21.00 «Республика хыпарсен кăларăмĕ
18.45 «Ылтăн çӳпçерен» /6+/
19.00 «Пехил» /12+/
19.30, 21.30 «Республика»
20.00 «Такие же» /12+/
20.30 «Открытый регион» /12+/
22.00 Х/ф «Дневной поезд» /16+/
00.00 Т/с «Совершенное сердце» /16+/

### Чăваш Наци радиовĕ

06.30-07.00 Вăрман кĕвви (12+) 7.10-8.00 Янра, юрă!( хит-парад) (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня (12+), 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Не формат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Символ веры. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Мăшăр çунат (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Детский перекресток . (6+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунтикун, ытларикун, юнкун, кĕçнерникун, эрнекун**
6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 — Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 — Новости. (12)

### Чăваш радиовĕ

**6.10 Анонс передач**
**6.15 События**
**6.27 Салтак пăтти**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Мамино право**
**7.33 Паянхи кун**
**7.37 Çула тухсан**
**7.51 Мы - вместе**
**7.58-8.00 Погода**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Театр у микрофона**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 16 ытларикун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.15, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15, 21.35 Т/с «МАЖОР» 16+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.15 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.30 «Структура момента» 16+
1.30, 3.05 Т/с «ВЕГАС» 16+
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Юрий Андропов. Терра Инкогнита» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПО ГОРЯЧИМ СЛЕДАМ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ-14» 12+
0.45 «Нюрнберг. 70 лет спустя.» 16+
1.45 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**9.00 Утренний гость /на чувашском языке/**
**9.35-9.55 Сто вопросов о столице. Актуальное интервью**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### Россия К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.15 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15, 23.35 Х/ф «ЛЕДИ МАКБЕТ МЦЕНСКОГО УЕЗДА»
12.40 «Эрмитаж - 250»
13.05, 22.45 Д/с «Апостолы». «Евангелист Марк»
13.35 Х/ф «ОТКРЫТАЯ КНИГА»
15.10 Academia
16.00 «Сати. Нескучная классика...»
16.40 Д/ф «Юл Бриннер. Душа бродяги»
17.20 «Мировые сокровища культуры»
17.35 «Декабрьские вечера. Избранное» Исаак Стерн и Ефим Бронфман
18.30 «Те, с которыми я... Андрей Смирнов»
19.15 Главная роль
19.30 Искусственный отбор
20.10 Д/ф «Людвиг Больцман. Высокочтимый профессор, глубоко обожаемый Луи!»
20.50 «Спокойной ночи, малыши!»
21.05 «Правила жизни»
21.30 Д/с «Рассекреченная история». «Лина Штерн. Секрет спасения»
22.00 «Игра в бисер»
0.55 Трио В. А. Моцарта в Театре Бибиена, Мантуя

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.25 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.30 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.20, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00 Т/с «БРАТАНЫ» 16+
23.00 «Анатомия дня»
23.55 Т/с «ЧЕЛОВЕК НИОТКУДА» 16+
1.50 Главная дорога 16+
2.20 «Враги народа» 16+
3.10 Т/с «ОДИН ПРОТИВ ВСЕХ» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.20 Х/ф «НЕ МОГУ СКАЗАТЬ «ПРОЩАЙ» 12+
10.00 Д/ф «Три жизни Виктора Сухорукова» 12+
10.55 «Доктор И...» 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «ЧЕТВЕРГ, 12-Е» 16+
13.25 «Простые сложности» 12+
14.00 «Карнавал» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.15 Без обмана. «Криминальный паштет» 16+
16.00, 17.55 Х/ф «ЧИСТО АНГЛИЙСКОЕ УБИЙСТВО» 12+
18.15 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «ВИКТОРИЯ» 16+
21.45, 1.00 Петровка, 38 16+
22.30 «Осторожно, мошенники!» 16+
23.05 «Удар властью. Михаил Евдокимов» 16+
0.00 События. 25-й час
0.30 «СтихиЯ» 12+
1.15 Х/ф «МАЛЕНЬКИЙ КУПАЛЬЩИК» 12+
2.45 Х/ф «ЖЕНАТЫЙ ХОЛОСТЯК»
4.15 Д/ф «Вертинские. Наследство Короля» 12+

### РЕН

5.00, 4.00 «СЛЕДАКИ» 16+
6.00, 18.00 «Верное средство» 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
7.30, 13.00 Званый ужин 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Военная тайна» 16+
11.00 Д/ф «Тайна спасения» 16+
14.00 «Засуди меня» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
20.00, 0.00 Х/ф «ПИСЬМА К ДЖУЛЬЕТТЕ» 16+
22.00, 23.30 «Смотреть всем!» 16+
2.00 Х/ф «КРЕМЕНЬ» 16+

### Чăваш Наци телекуравĕ

06.00, 18.30, 21.00 «Республика» хыпарсен кăларăмĕ
06.15 «Ылтăн çӳпçерен» /6+/
06.30, 19.30, 21.30 «Республика»
07.00 М/ф «Маленький рыжик» /6+/
07.30, 17.30 Т/с «Чужие тайны» /16+/
08.30 «Дело вкуса» /12+/
09.30 Х/ф «Цыган» /12+/
11.30 Д/ф «Скажи, что не так» /16+/
12.30 Д/ф «Час суда» /16+/
13.30 М/с «Золушка» /12+/
14.00 Д/ф «Люди РФ /12+/
14.30 Д/ф «Наша марка» /12+/
15.00 Т/с «С Новым счастьем!» /16+/
16.00 Д/ф «Утомленные славой» /12+/
17.00 М/ф "Пластилиновая ворона" /6+/
18.45 «Тĕплĕ калаçу» /12+/
19.00 «Аван-и» /12+/
20.00 «Правовое поле» /12+/
20.30 «Акилбупсер» /12+/
21.15 «Тĕплĕ калаçу» /12+/
22.00 Х/ф «Сноровка... и как ее приобрести» /16 +/
00.00 Т/с «Совершенное сердце» /16+/

### Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл.(12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.30-10.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Чăваш Ен çулсем тата çынсем. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

### Чăваш радиовĕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Кăмăлтан. Ирхи концерт**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă саламĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.27 Будьте здоровы**
**7.37 Тӳсĕм**
**7.47 Олимпийские горизонты**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Остров молодых**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 17 юнкун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.15, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15, 21.35 Т/с «МАЖОР» 16+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.15 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.30 «Политика» 16+
1.30, 3.05 Т/с «ВЕГАС» 16+
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Сталин. Последнее дело» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПО ГОРЯЧИМ СЛЕДАМ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ-14» 12+
0.45 «Томограмма судьбы. Извилины таланта» 12+
1.45 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### Россия К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.15 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15, 23.35 Х/ф «ПАЛАТА №6»
12.40 «Красуйся, град Петров!»
13.05, 22.45 Д/с «Апостолы». «Лука»
13.35 Х/ф «ОТКРЫТАЯ КНИГА»
14.40, 17.20, 1.40 «Мировые сокровища культуры»
15.10 Academia
16.00 Искусственный отбор
16.40 «Больше, чем любовь»
17.35 «Декабрьские вечера. Избранное»
18.30 «Те, с которыми я... Виктор Титов»
19.15 Главная роль
19.30 «Абсолютный слух»
20.10 Д/ф «Петр Лебедев. Человек, который взвесил свет»
20.50 «Спокойной ночи, малыши!»
21.05 «Правила жизни»
21.30 Д/с «Запечатленное время». «Дети из трущоб»
22.00 Власть факта. «Точные науки: в поисках истории»
1.00 Д/ф «Борис Анреп. Мозаика судьбы»

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.25 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.30 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.20, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00 Т/с «БРАТАНЫ» 16+
23.00 «Анатомия дня»
23.55 Т/с «ЧЕЛОВЕК НИОТКУДА» 16+
1.45 Квартирный вопрос 0+
2.50 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ОДИН ПРОТИВ ВСЕХ» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.15 Х/ф «ЧЕЛОВЕК-АМФИБИЯ»
10.05 Д/ф «Зинаида Шарко. В гордом одиночестве» 12+
10.55 «Доктор И...» 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «ХОЗЯЙКА «БЕЛЫХ НОЧЕЙ» 16+
13.40 «Простые сложности» 12+
14.10 «Наша Москва» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.15 «Удар властью. Михаил Евдокимов» 16+
16.00, 17.55 Х/ф «ЧИСТО АНГЛИЙСКОЕ УБИЙСТВО» 12+
18.15 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «ВИКТОРИЯ» 16+
21.45, 1.05 Петровка, 38 16+
22.30 Линия защиты 16+
23.05 «Советские мафии. Волшебники Изумрудного города» 16+
0.00 События. 25-й час
0.25 «Русский вопрос» 12+
1.20 Х/ф «ИМПОТЕНТ» 16+
2.40 Х/ф «НЕУДАЧНИК АЛЬФРЕД, ИЛИ ПОСЛЕ ДОЖДЯ ПЛОХАЯ ПОГОДА» 12+
4.10 Д/ф «Леонид Броневой. А вас я попрошу остаться» 12+

### РЕН

5.00, 4.00 «СЛЕДАКИ» 16+
6.00, 18.00 «Верное средство» 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
7.30, 13.00 Званый ужин 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Территория заблуждений» 16+
11.00 Д/ф «Земля. В поисках создателя» 16+
14.00 «Засуди меня» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
20.00, 0.00 Х/ф «ЦИКЛОП» 16+
21.50, 23.30 «Смотреть всем!» 16+
1.50 Х/ф «ДУХОВ ДЕНЬ» 16+

### Чăваш Наци телекуравĕ

06.00, 18.30, 21.00 «Республика» хыпарсен кăларăмĕ
06.15 «Тĕплĕ калаçу /12+/
06.30, 19.30, 21.30 «Республика»
Иегова свидетелĕсем, Иегова свидетелĕсен обществи – тĕн енĕсенчен пĕри. Вăл Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче XIX ĕмĕр вĕçĕнче çуралнă. Христос тĕнĕ йышăннинчен нумайăшне /чун вилĕмсĕрлĕхĕ, çăтмаха тата тамăка ĕненни/ хирĕçлет. Иеговăна мала кăларса Иисус Христос унăн ирĕкне пурнăçлакан пек пăхаççĕ. Хăйсене Иегова суйласа илнисем теççĕ. Хăйсен ретне тĕрлĕ тĕн, культура, наци çыннисене явăçтарас тесе çине тăраççĕ. XX ĕмĕр вĕçĕнче 232 çĕршывра Иегова свидетелĕсем 5 миллион çын пулнă.

Чăваш Енре Иегова свидетелĕсен общества майлисен ĕçĕхĕлĕ çинчен пуçласа 1960 çулсенче пĕлтерме тытăннă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче вĕсем хăйсен ĕçне анлăн сарса янă. Пухусемпе ушкăнсем Чăваш Енри темиçе хулапа районта пур, вĕсенчен пĕрне те республика территорийĕнче регистрацилемен.

## Усăллă япаласемпе пуян

**Федерацин Атăлçи округне хăçан туса хунă? Унăн уйрăмлăхĕсем çинчен каласа кăтартăр-ха.**

**С.СЕМЕНОВ.**
Шупашкар районĕ.




Çак округа Раççей Федерацийĕн Президенчĕн указĕпе 2000 çулхи çу уйăхĕн 13-мĕшĕнче йĕркеленĕ. Унта çĕршывăн 14 субъекчĕ кĕрет, çав шутра: 6 республика /Пушкăртстан, Мари Эл, Мордва, Тутарстан, Удмурт Республики, Чăваш Республики/, 7 облаç /Киров, Чулхула, Эрĕнпур, Пенза, Сарăту, Самар, Чĕмпĕр/ тата Пермь крайĕ. Федерацин Атăлçи округĕн центрĕ – Чулхула хули.

Округ территорийĕ 1037 пин тăваткал километр йышăнать, çакă Раççей Федерацийĕн лаптăкĕн 6,1%-пе танлашать.

Округра çĕр айĕнчен тĕрлĕ усăллă япаласем кăлараççĕ. Нефтьпе газ саппасĕсем Раççейĕн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕн 13 тата 2%-пе танлашаççĕ /Тутарстан, Пушкăртстан, Удмурт Республики, Пермь крайĕ, Самар, Эрĕнпур, Сарăту облаçĕсем/. Кали тăварĕсем кăлараççĕ, фосфоритăн пысăк ресурсĕсем пур – 60% /Киров облаçĕ/, цинк, пăхăр, кĕмĕл, ылтăн кăлараççĕ. Никелĕн, хромăн, тăхланăн, тимĕр рудин, титанăн, çĕр кăмрăкĕн пысăках мар вырăнĕсем пур. Чăваш Республики тĕпрен илсен строительствăра кирлĕ минералсемпе тивĕçтерет.

Удмурт, Мари Эл, Киров тата Эрĕнпур облаçĕсем, Пермь крайĕ вăрман хуçалăхĕн продукцине тĕрлĕ çĕре ăсатаççĕ /çав шутра ют çĕршывсене те/. Федерацин Атăлçи округĕн рейтингĕ ăслăлăхра, искусствăпа культурăра пысăк. Кунта аслă вĕренÿ заведенийĕсем 100 ытла, ăслăлăх учрежденийĕсем 500, çав шутра Раççей наукăсен академийĕн институчĕсем те.

**Кăларăма Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.**

ЮБИЛЕЙ

# Çĕнĕ юрпа – çĕнĕ юрă

***Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕ 90 çула çитрĕ. Çавна май унăн пултарулăх ертÿçи, Раççей халăх артисчĕ Юрий Васильев журналистсем валли пресс-конференци ирттерчĕ. Унта çавăн пекех ансамблĕн директорĕ Ольга Королькова, тĕп балетмейстерĕ Людмила Нянина тата фольклор тĕпчес енĕпе палăрнă ăсчах, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Александр Осипов хутшăнчĕç.***



Ансамбль утса тухнă çул наци искусствинче тарăн йĕр хăварнă, хăйĕн сăн-сăпачĕпе палăрма пултарнă.

Юрий Васильевич коллективăн хальхи ĕçĕ-хĕлĕ пирки сăмах тапратиччен иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсене аса илчĕ. 1920 çулхи çурла уйăхĕнче Ф.П.Павлова Шупашкарти тĕп чăваш педтехникумне чĕнсе илнĕ. Вăл кунта йĕркеленĕ хор хулари ытти коллективсен хушшинче хăйĕн репертуарĕн нацилĕхĕпе, юрăçсен ăсталăхĕпе, чĕрĕлĕхĕпе палăрса тăнă. Репертуарта 40 яхăн халăх юрри пулнă. Павлов хорăн пуласлăхĕ пысăк пуласса шаннă. «Чăвашсен профессиллĕ хорĕ тата наци пĕлтерĕшĕ» статьяра вăл: «Енчен пĕтĕмпех çапла пулсан, чăвашсен профессиллĕ яланхи хорне йĕркелесси – çут ĕçĕн черетлĕ ĕçĕ», – тенĕ. Çапах та 1924 çулччен, асăннă ĕçе В.Воробьев пуçăниччен, чăваш хорĕ юрлама юратакансен кружокĕ пек çеç çÿренĕ. Профессиллĕ коллектива Чăваш патшалăх хорĕ ят панă, унăн репертуарне чăваш халăхĕн çĕнетнĕ юррисем, композиторсен произведенийĕсем кĕнĕ. Вăл ялсене, хулари çынсем патне май çитнĕ таран тухса çÿренĕ. Çакă çеç-и? Атăл тăрăхĕнчи пысăк хуласенче, Мускавра, Ленинградра хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарнă. Халăх искусствине тĕнчене кăларнă, çав вăхăтрах коллектив хăй те ытти культурăпа сывăхланнă.

Чăваш патшалăх хорĕ 1936 çулта СССРти халăхсен хорĕсен Пĕтĕм Союзри олимпиадине хутшăннă, çав çулах Пĕтĕм Союзри радиофестиваль премине те тивĕçнĕ.

1939 çулта хортан Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕ туса хунă. Ăна А.Г.Орлов-Шуçăм ертсе пыма пуçланă. Хорпа пĕрлех наци хореографийĕ те ура çине çĕкленме пуçланă. Вăрçă çулĕсенче пĕр хушă ĕçлеме май килмен пулсан, 1942 çултан пуçласа республика тăрăх, 1943 çулта Брянск, Калинин фрончĕсене çитсе концертсем кăтартнă. Вăрçă çулĕсенчех коллектива Ф.М.Лукин /1942-1957/ ертсе пыма пуçланă. Г.С.Лебедев вара вăтăр çул ытла /1943-1973/ хормейстерта ĕçленĕ. Çак чаплă композиторсем хăйсен пултарулăхне ансамбльпе çыхăнтарни унăн кун-çулĕнче тарăн йĕр хăварнă.

1976 çулта коллектива Ю.В.Васильев ертсе пыма пуçланă. Унпа пĕр вăхăтрах хормейстерпа балетмейстер та улшăннă. Çав вырăнсене Г.Егоровпа А.Ангарова çирĕплетнĕ. Çĕнĕ ăрăва мĕн тивĕçтерсех кайман? Чи малтанах репертуар. Унăн программи ытларах вырăс тата эстрада юррисенчен тăнă. Халăх юррисен тĕпчевçисемпе çыхăну тытса ĕçлеме пуçлани ăнăçу кÿнех. Часах «Чăваш такмакĕсемпе ташшисен кăшăлĕ», «Улахра» сюитăсем çуралнă. Унтан – ыттисем. Ансамбль çав вăхăтрах чăваш композиторĕсемпе тачă çыхăну йĕркеленĕ. Ку енĕпе А.Никитин, Н.Казаков, А.Осипов, Ю.Григорьев, Л.Чекушкина, А.Васильев, О.Трифонов ячĕсене палăртса хăвармалла.

Ансамблĕн паянхи пурнăçĕ йăлтах пирĕн куç умĕнче темелле. Вăл темиçе хут та ЧР Пуçлăхĕн грантне тивĕçсе çĕнĕ программăсемпе савăнтарчĕ. Ваттисем калашле, çĕнĕ юрпа кашнинчех çĕнĕ юрă янăрать. Репертуарти ахах-мерчен номерсемпе тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнчи вуншар патшалăх халăхне паллаштарнă. Чăваш юррисемпе ташшисене Франци, Египет, Швейцари, Япони, Сири, Китай, Итали, Испани тата ытти çĕршывра пурăнакансем курса киленнĕ. Кăçал чăваш юрă-ташă ăстисем Америкăна, унтан Грецие çитсе килчĕç.

Коллектив ЧР Пуçлăхĕн гранчĕн укçипе Çĕнĕ вокалпа хореографи композицийĕ хатĕрлерĕ. Кунта – Пушкăртстанра пурăнакан йăхташсен фольклорĕ. Темиçе ярăмран – «Шур Атăл кĕввисем», «Пур тăван та пухăнсан», «Слакпуç туйĕ» тата ыт.те – тăрать вăл. Халăх юррисене Зинаида Козлова, Александр Осипов илемлетнĕ, ташшисене Людмила Нянина, Виктор Шершнев лартнă. Режиссерĕ – ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Юрий Филиппов.

90 çул – паллă çул. Ăна тĕплĕн хатĕрленни куçкĕрет. Юрăпа ташă ансамблĕн чаплă солисчĕсен юррисене пухса «Чăваш шăпчăкĕсем» диск кăларнă. Хор валли çырнă ултă ярăм уйрăм дискпа тухнă. Юбилей концерчĕ, вăл декабрĕн 12-мĕшĕнче иртрĕ, ансамблĕн тĕрлĕ çулти репертуарĕнчен илнĕ чи лайăх номерсенчен тăрать. Ĕç çакăнпа вĕçленмест, умра – Аслă Çĕнтерĕвĕн 70 çулхи юбилейĕ.

■ **Надежда СМИРНОВА**

ПРЕМЬЕРА

# Ан хăра, ку театр çеç...

*Ман пур çĕрте те тĕшши патнех çитес килет.*

**Борис ПАСТЕРНАК.**

К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче «Чикагори кукаçин пурлăхĕ» комеди кăтартрĕç. Кăтартрĕç те – ăс-тăнăмра çак çĕнĕ спектакль ыйту çине ыйту çуратрĕ. Йăпатуллă каларăш, «Ан хăра, ку театр çеç» текенни, спектакль вăхăтĕнче хăйне хăех куça курăнман хÿтлĕх хÿми пек майлашăнса ларчĕ пулин те – чунчĕрене канăç паман шуйханчăк кăмăл ниепле те сĕвĕрĕлеймерĕ. Камитри йĕксĕк те аскăнчăк сăнар Гаврила Гаврилович Смирнов /РФ тава тивĕçлĕ тата Чăваш халăх артисчĕ Владимир Семенов/ пистолетне туртса кăларнă май: «Ан хăра, газовый анчах вăл», – тенине асра тытса «Ан пăшăрхан, ку театр анчах» тесе алă сулмалла та йăлтах манса кайса лăпланмаллачĕ пек ĕнтĕ. Çук çав... Çакăнта ĕнтĕ театрăн чăн хăвачĕ – этем чунне пăлхатса ярса ăна тасарах та ырăрах пулма хистекен асамлă вăй.

Пурте пĕлетпĕр: театрта чăнчăнни сахал – сцена çинчи çурт кÿлеписем те хытă хутран маилаштарнăскерсем çеç, арçын хĕрарăма «юрататăп» тесе парнелекен чечекĕсем те тĕрлĕ тĕслĕ вĕлтĕрккесенчен майлаштарнăскерсем кăна... Анчах та этем чун-чĕри, çавна май ун туйăмĕсем те, унăн куççулĕ те, ахăлтатса кулни те, вăл пăлханса сывлакан сывлăш та – чăн-чăннипех çке!



«Театр – тĕкĕр мар, мĕн пуррине пысăклатса кăтартакан кантăк», – тенĕ Владимир Маяковский. Шăпах çак шухăша çирĕплетет те Наталия Сергеева режиссер Виктор Ляпинăн «Наследство дедушки из Чикаго» пьесине лартнă икĕ пайлă камит. Те Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер текста вырăсларан çав тери ăнăçлă куçарнăран, те артисчĕсем çав тери витĕмлĕ вылянăран – унти каларăшсене сцена çинчи сăнарсем мар, хамăр хушăмăрти çынсемех янратнăн туйăнать: «Лаша пек ĕçлетĕн, йытă пек чупатăн – хаçат вулама та вăхăт тупаймастăн», «Ачасене ашшĕсĕр ÿстересси – пирĕн çемье традицийĕ», «Эсĕ хăçан та пулсан Канар утравĕ çинче пулнă-и?», «Пирĕн вара хамăрăн вăйă», «Кÿпсе савăнăр ĕмĕрте пĕрре»...

Сăвăлама та пĕлет иккен икĕ сехет каялла кăна ресторанта паллашнă хĕрарăмпа пĕр вырăн çине кĕрсе выртма тĕмсĕлекен арçын:

«Çÿлтен телей те, ăраскал
Пĕр харăс аннăн туйăнать»...

Шăпах çÿлтен персе анакан янтă пуянлăх çинчен /çакăнта пулас вĕсемшĕн пĕтĕм пурнăç ăраскалĕ/ ĕмĕтленет те спектакльти сăнарсенчен нумайăшĕ. Андрей Громов куштан йĕкĕт /ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Валерий Карпов/ янтă долларсемшĕн утайми пулнă вата карчăка та качча илме хатĕр. Лешĕ вара, Надежда Константиновна Смирнова тенкенскер /РСФСР тата Чăваш халăх артистки Нина Яковлева/, хĕрĕпе мăнукне ăс парас вырăнне хăйне арçынсем алă çинче йăтса çÿреччĕр-ха тесе кăна пурăннă пекех курăнать...

Камит жанрне тĕпĕ-йĕрĕпе пăхăнса пырас тĕллев тытнăранши, спектакльти сăнарсен нихăшĕн те чаракĕ çук. Чаракĕ çукранах-тăр – ахăлтатăвĕ те зал тулли. Мана вара сцена çинчи ĕç-пуç телекураври ТНТ каналпа çавăрттаракан йăлăхтармăш та сĕмсĕр шÿтсене, «Калаçчĕрех» ток-шоура вĕçĕ-хĕррисĕр сÿтсе явакан пулăмсене аса илтерчĕ... Çавăнпах кулма та хал юлман пек... Мĕн тăвас тетĕн, паянхи театрта та – паянхи пурнăç, мĕн пуррине темиçе хут пысăклатса кăтартни...

Спектакльти тĕп сăнарпа, Тимур Смирновпа /Алексей Степанов артист/ пĕр класра вĕренекен Марина /Екатерина Спиридонова артистка/ хăй юхха пулнине тÿрре кăларас кăмăлпа: «Бордельсенче ĕçлемелли самана килнишĕн эпир айăплă-им?» – тесе шуйханать. Хамăр çылăха самана çине йăвантарни – пархатарсăр пулăм, йăнăш çулпа чуптарни. Таса та черчен чунсемшĕн самана ĕмĕр-ĕмĕрех тумхахлă /Купринăн «Яма», Толстойăн «Воскресение» хайлавĕсене аса илер/. Хăш çулпа утассине этем хăй суйлать. «Эпир, тен, çÿп-çапсен çÿпçапĕ», – тет Вера Александровна Смирнован /Чăваш халăх артистки Валентина Иванова/ бомжа тухнă малтанхи упăшки Сергей Ильич /ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Николай Сергеев/. Анчах та вăл хăй çÿп-çап маррине, çÿп-çап хушшинче те чун хавалне упраса хăварнă çын иккенне питĕ лайăх туять, ку унăн кашни хусканăвĕнче палăрать. Çакна ăнланнăранах-тĕр Марина малашнехи пурнăçĕн тĕрĕс çулне суйласа илет.

Йăх-яхсен икĕпитлĕхне тăрă шыв çине кăларма пулăшнăултав çиеле тухсан: «Нимĕн те пулман. Эпĕ – шÿтлерĕм», – тет Тимур Смирнов. Хам та çаплах: «Эпĕ театрта пулман, нимĕн те курман», – тейĕттĕм... Çук çав, эпĕ театрта пулнă, йăлтах курнă... Йăлтах курнă та, хам епле çÿпçаплă пулнине ăнланса илнĕ.

■ **Римма ПРОКОПЬЕВА.**

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăнÿкерчĕкĕ

# Сан ентешӳ, чăваш çынни, вĕçсе кайнă космоса!



*Енчен те эпир аттепе анне чĕлхине мансан, чăваш халăхĕ те пĕтет.*
*Андриян НИКОЛАЕВ*

Эпиграф вырăнне илнĕ сăмахсене таçтан шухăшласа кăларман, нумаях пулмасть "Çĕнĕ Вăхăт" издательствăра 300 экземплярпа кун çути курнă "Легендарный Андриян Николаев" кĕнекерен илнĕ. "Первое знакомство с Андрияном" сыпăкра кĕнеке авторĕ, медицина ăслăлăхĕсен докторĕ Николай Григорьев профессор, Андриян Григорьевичпа еплерех паллашнине аса илнĕ май космонавт хăйне каланă сăмахсене чăвашлах илсе кăтартнă: "Маттур, чăваш чĕлхине манман. Енчен те эпир аттепе анне чĕлхине мансан, чăваш халăхĕ те пĕтет". Тăван сăмахлăх мĕнле пуян та хитре тата хăй мĕн ачаранах "Вĕç, вĕç, куккук" юрра юратни пирки те чунне уçса калать Андриян Николаев, çавна май паянхи вулакансене те çакăн пирки пĕлтерет.

Çĕнĕ кĕнекене пахаланă уяв декабрĕн 11-мĕшĕнче Чăваш наци библиотекин конференц-залĕнче иртрĕ. Уява çак проект ертӳçи, Чăваш халăх поэчĕ Валери Туркай ертсе пычĕ. Чи малтанхи сăмах – "Легендарный Андриян Николаев" кĕнекери йĕркесем: 1962 çулхи августăн 11-мĕшĕнче 11 сехет те 30 минутра пирĕн ентеш космоса çĕкленни пирки Левитан радиопа пĕлтерни... Красноармейски районĕнчи Танăш ялĕнче çуралса ӳснĕ Юрий Семенов, халĕ ĕнтĕ Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер, ун чухне Германире салтак хĕсметĕнче тăнă. ТАСС хыпарне илтсен юлташĕсем ăна пурте пĕрле пухăнса: "Сан ентешӳ, чăваш çынни, вĕçсе кайнă космоса!" – тесе çӳлелле ывăтма тытăннă. Пурте çав тери савăннă. Çакăн çинчен хавхаланса каласа пачĕ те Юрий Семенович уява пухăннисене. Автора, Николай Григорьева, тав тунă май кĕнекене юратса вуласа тухнине, унта пăлханмалли самантсем те чылайййине пĕлтерчĕ.

Юратса çырнă кĕнекене, чăнах та, юратмасăр вулама май çук. Ун çинчен калаçнă чух сăмахĕсем те юрă пек хăйсемех юхса пыраççĕ. Шăпах çакă сисĕнчĕ те кĕнеке уявĕнче. Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев ун пирки "питĕ ăшă кĕнеке" тесе каларĕ, психологи ăслăлăхĕсен докторĕ Валерий Лисов Андриян Николаев чăн-чăн легенда пулса тăнине палăртрĕ, чылай çул космонавт водителĕ пулнă Иван Васильев Андриян Григорьевич çав тери тӳрĕ кăмăллă та уçă чунлă çын пулнине хăйĕн асаилĕвĕсемпе тепĕр хут çирĕплетрĕ.

Виталий Станьял ăсчах вара: "Манăн хамăн Андриян", – тесе çамрăк чухнехине, редакци хушнипе Андриян Николаевран автограф илме кайнине аса илчĕ. Вăл питĕ сисĕмлĕ çын пулнă, хаçат корреспондентне космонавт çывăхне те яманнине кура: "Ирттерсе ярăр ăна, ку манăн шăллăм", – тесе хăй ытамне илнĕ иккен.

Çапла, пирĕн кашнин хăйĕн Андриянĕ. Кашни чăвашах ăна хăйĕн тăванĕ пек, чи çывăх çынни пек туять, юратать. Çакăн çинченех пулчĕç Эмиль Ургалкин, Порфирий Узюков, Алексей Албутов тухса каланă сăмахсем те. Аслă ăрăвăн ырă шухăш-кăмăлне тĕлпулăва килнĕ Шупашкарти 10-мĕш, 24-мĕш шкулсенче вĕренекен ачасем те яланлăхах ăша хывнине шанас килет.

Уява пĕтĕмлетнĕ май кĕнеке авторĕ çак нумай сăнӳкерчĕклĕ, хытă хуплашкаллă паха кăларăма чĕри чĕннĕрен, Андриян Николаева хисепленĕрен тата унăн вилĕмĕ пĕтĕм чунне кисретнĕрен çырнине пĕлтерчĕ. Ку – чăн сăмах. Çакна кĕнекене алла тытса вуласа тухнă кирек хăш çын та ăнланса илĕ.

■ **Римма ПРОКОПЬЕВА.**

Василий КУЗЬМИН сăнӳкерчĕкĕ

# Энĕшпуççем – хăрушсăрлăхшăн

## Вут-кăварпа кĕрешекенсен постне йĕркеленĕренпе 85 çул çитрĕ

***Вăрмар районĕнчи Энĕшпуç ялĕнче пушар сӳнтерекенсен постне туса хунăранпа 85 çул çитрĕ. Çакна ялта анлăн та савăнăçлăн палăртрĕç.***

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Олег Иванов каласа кăтартнă тăрăх – 1929 çулта кунта «Аниш» колхоз йĕркеленнĕ, унăн председателĕ пушара хирĕç кĕрешес ĕçе пуçăнма хушнă. Çапла майпа ялта ун чухнехи колхозниксемшĕн çĕнĕ япала – пост – йĕркеленнĕ. Вăл чиркĕве хирĕç вырнаçнă. Пушарпа кĕрешме ятарласа тунă хатĕрсем те пулман ун чухне. Пĕтĕм яваплăха ялти тавçăруллă та ĕçчен çынна – пĕрремĕш тĕнче вăрçине хутшăннă, артиллери конюхĕ пулнă Константин Петрович Крдыкова – шанса панă.

Акă мĕн çырать Крдыковăн мăнукĕн ачи, Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн шалти служба подполковникĕ Ольга Нягина «Чи лайăх ĕç династийĕ пирки сведенисем» брошюрăра: «Константин Петровича виçĕ лаша уйăрса панă: пĕринпе колхоз ертӳçисене турттарнă, тепĕр иккĕшне пушар тухакан вырăнсене каймашкăн тытса тăнă. Ял çыннисем пурте пĕрле тăрăшса Пушар сӳнтерме каймалли икĕ лав йĕркеленĕ: пĕрин çинче вăрăм авăрлă пакурсем, лумсем, кĕреçесем, пуртăсем тата витресем пулнă, тепри – шыв пичкипе. Хĕллехи вăхăтра тухса çӳремешкĕн вăрăмлатнă ятарлă çуна хатĕрленĕ. Колхоз правленийĕн йышăнăвĕпе иккĕмĕш лавçи пулма Константинăн пĕртăванне Степан Петровича уйăрса лартнă. Малашнехи ĕçе дежурство мелĕпе йĕркеленĕ: каçхине иккĕшĕ те дежурствăра пулнă, кăнтăрла пĕри председателе турттарнă. Вĕсен тивĕçĕсен шутне халăха вут-çулăм алхасма тытăнни çинчен чиркӳ чанĕсене çапса пĕлтересси, инкек вырăнне пушар лавĕсемпе хăвăртрах çитесси, пушара сӳнтермешкĕн çынсене явăçтарасси кĕнĕ. Кулленхи ĕç те вĕсен сахал мар пулнă: лашасене çитересси-пăхасси, вĕсем валли утă-улăм хатĕрлесси, пушарпа кĕрешмелли инвентаре, ут хатĕр-хĕтĕрне юсавлă тытса тăрасси. Çапла Энĕшпуç ялĕнче Крдыковсен–Константиновсен–Нягинсен династийĕпе пĕр вăхăтрах пушар посчĕ йĕркеленнĕ. Пушар службин çавăн пекех Михайловсен, Серинсен, Кирилловсен, Павловсен, Ивановсен, Дмитриевсен, Смолинсен, Нягинсен, Федоровсен, Сидоровсен, Захаровсен çемье ĕçĕ пулса тăнă».

Эпĕ хам енчен çакна палăртса хăварасшăн: Энĕшпуç ялĕнчи 130 ытла çын хăйĕн пурнăçне пушар хуралĕпе çыхăнтарнă, вĕсенчен 56-шĕ – офицер.

Пушара хирĕç кĕрешессипе Энĕшпуççем паянхи кун та палăрса тăраççĕ. Ял халăхĕ «ниме» мелĕпе ятарлă пушар деповĕ хăпартнă. Каярахпа кунта Энĕшпуç ял тăрăхĕн муниципалитет пушар хуралне йĕркеленĕ. Паян



çак депора «Субару» мотопом комплекчĕпе икĕ автомашина пур, çавăн пекех тĕп урамра хыпарлав тытăмне вырнаçтарнă. Инкек сиксе тухсан пушар техники ял тăрăхĕнчи çеç мар, Вăрмар районĕнчи ытти яла та çитет. Депона уçнă хыççăн пушар тухасси те чакнă. Çулсеренех ял тăрăхĕн администрацийĕ халăха хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессипе çыхăннă тĕрлĕ конкурса хутшăнать. 2010 çулта вăл республикăри «Вырăнти хăйтытăмлăхăн халăха хăрушсăрлăхпа тивĕçтерес енĕпе чи лайăх органĕ /ял тăрăхĕсен хушшинче/» смотр-конкурсра çĕнтернĕ. Çав çулах федерацин Атăлçи округĕнче те пĕрремĕш пулса тăнă. Кăçал асăннă конкурсра виççĕмĕш вырăн йышăннă. 2011 çулта Чăваш Республикин территорири подсистемисен граждан оборонин тытăмне лайăхлатас енĕпе – каллех пĕрремĕш. Ял тăрăхĕ хăй те конкурссем йĕркелет. Тĕслĕхрен, «Пушар тĕлĕшпе чи хăрушсăр çурт» ятлине. Çĕнтерӳçĕсене Дипломпа тата парнесемпе чысласçĕ.

Уявра ăшă сăмах нумай янăрарĕ. Сумлă хăнасем Энĕшпуç ялĕнче пурăнакансем пурте хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе тимлĕ пулнине палăртрĕç. Çав кунах вут-çулăмпа кĕрешекенсен ретне çамрăксене чыслама йышăнчĕç.

■ **И.КЛЕМЕНТЬЕВА**

СПОРТ

# Ентешсен парнисемшĕн

***Красноармейскинчи физкультурăпа сиплев комплексĕнче «Трак ен» ентешлĕх членĕн, «Сенкер» акционерсен усă обществин генеральнăй директорĕн Виктор Николаевăн парнисене çĕнсе илессишĕн сĕтелçи теннисла выляссипе турнир иртрĕ. Виктор Степанович хăй шучĕпе районти 11 вăтам шкула сĕтелçи теннис комплекчĕсене 200 пин тенкĕлĕх парнеленĕ.***



● *«Трак ен» волейбол команди – турнир çĕнтерӳçи.*

– Çамрăк спортсменсем ку хутĕнче командăпа район шайĕнче мала тухассишĕн тупăшаççĕ. 17 команда вăй виçет. Тĕрлĕ шкултан 50 ытла теннисист хутшăнма кăмăл тунă. Малти вырăнсене çĕнсе илнисем дипломсемпе медальсене, парнесене тивĕçĕç. Турнир кăтартăвĕсемпе спортăн ку енĕпе районăн пĕрлештернĕ командине йĕркелетпĕр. Вăл вара декабрь уйăхĕнче республика чемпионатне хутшăнĕ, – пĕлтерчĕ Виктор Степанович.

Вăйă хĕрӳ иртрĕ. 9-мĕш классенхисем – 11 команда – икĕ ушкăнра вăй виçрĕç. Финалта пĕрремĕш вырăна Трак вăтам шкул команди йышăнчĕ. Иккĕмĕшĕнче – Алманчсем, виççĕмĕшĕнче – Мăн Шетмĕсем.

10-11 классенче вĕренекенсен 6 командинчен каллех Трак вăтам шкул теннисисчĕсем палăрчĕç, ылтăн медале тивĕçрĕç. «Кĕмĕл» – Пикшиксенче, «бронза» – Алманчсенче.

Мăн Шетмĕ тăрăхĕнче пĕртăван Львовсен çемйи волейбол турнирне хăйсен ашшĕне Леонтий Дмитриевича, «Мичурин» совхоз директорне, халалласа ирттернĕ.

Çĕнтерӳçĕ командăсене «Трак ен» ентешлĕхĕн куçса çӳрекен кубокĕсемпе чысларĕç. Призер-командăсене турнирсен тĕп спонсорĕсем Виктор Николаевпа Алексей Львов хаклă парнесемпе чысларĕç.

■ **Виктор ДАНИЛОВ.**
Красноармейски районĕ.

Автор сăнӳкерчĕкĕсем



● *Çамрăк теннисистсем хĕрӳ ăмăртура.*

# Тĕнче кубокĕнчен – медальсемпе

***Чăваш Ен кĕрешӳçисем Анастасия Тарасовăпа Елена Карпова тĕнче кубокĕнчен медальсемпе таврăннă. Йăлана кĕнĕ ăмăрту ку хутĕнче Оренбург хулинче иртнĕ.***



Тĕнче кубокне çĕнсе илессишĕн планетăри чи вăйлă спортсменсем вăй виçнĕ. Чăваш Ен чысне Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренекенсем хӳтĕленĕ. 76 килограмран йывăртарах виçеллĕ ушкăнра Çĕмĕрле пики Анастасия Тарасова Казахстан хĕрĕпе кĕрешсе «кĕмĕл» çĕнсе илнĕ. Çĕрпӳри Елена Карпова ку виçере виççĕмĕш вырăн йышăннă, вăл та Казахстан спортсменкине парăнтарнă. ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ Николай Петров патĕнче ăсталăха туптакан хĕрсен пĕрремĕш çитĕнĕвĕ мар ку. А.Тарасова 2013 çулта çĕршыв тата тĕнче чемпионачĕсенче çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçнĕ, 2012 çулта та вăл Раççейре чи вăйлисен йышĕнче пулнă. Раççей спорт мастерĕ Е.Карпова та çĕршыв чемпионачĕсемпе кубокĕсенче малти вырăнсене йышăннă.

■ **А.МИХАЙЛОВ**

# Реклама Пĕлтерӳ

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

АУ "Издательский дом "Хыпар"
**требуется МЕНЕДЖЕР ПО РЕКЛАМЕ**
*Зарплата высокая + %*
Справки по телефонам: 56-00-67, 56-04-17

АУ "Издательский дом "Хыпар"
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на 7 этаже Дома печати
Справки по телефонам: 28-83-70, 56-04-17

*Кĕтеснерсене Çĕнĕ 2015 çулпа Ваçуксем саламлаççĕ.*

## Саламлатпăр



*Патăрьел районĕнчи Тикеш ялĕнче пурăнакан*
*Валерий Николаевич СЕЛИВАНОВА*
*60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Хаклă çыннăмăр, сывлăху çирĕп, ĕмĕрӳ вăрăм пултăр. Мĕн ĕмĕтленнĕ, палăртнă тĕллевӳсем пурнăçланса пычăр. Çемьере туслăхпа юрату хуçалантăр.*
*Умри çулу тап-такăр пултăр,*
*Вăл çирĕп ялкăшса çап-çут.*
*Сана кун-çул телей çеç кӳтĕр,*
*Пĕр такăнмасăр ут та ут!*
*Мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, 4 мăнукĕ, хăти-тăхлачи, тăванĕсем.*

## ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 89876734754.

## ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 89625994706.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89603109878.

**433.КОРОВ.** Т. 8-927-850-85-64.

**730.КРС** – коров, бычков и т. д. Т.: 8-903-389-85-72, 8-906-130-91-84.

## ĔÇ РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

## ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Авланман арçын ĕçмен, пирус туртман, ялта пурăнма килĕшекен 30-40 çç. пĕччен хĕрарăмпа паллашасшăн. Тел. 8-987-671-48-08.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории "земли сельскохозяйственного назначения" с кадастровым номером 21:17:060401:1224, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, для огородничества, общей площадью 293 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ "МФЦ", с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:160101:33 площадью 72103 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Тойсинское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел.: (83532)6-14-26.

## СУТАТĂП ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.

**2.Акция! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 8-967-470-46-77.

**3.Акция! Кольца колодезные** диам. – 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, **песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич, кольца.** Т. 8-961-339-33-63.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА – немецкое качество.** Дёшево. Замер, доставка – бесплатно. **Т. 8-937-010-10-54.**

**24.Грабли, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 89876664140, 89370100141.

**48.Керамблоки; все для фундамента** – ФБС, бой кирпича, бетона, сваи, ОПГС, песок. Доставка. Т. 8-906-381-44-20.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53.Отруби, зерно, к/корм, сахар,** муку. Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, берёза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. **Т. 8-937-952-84-67,** Владимир.

**79.ПРИЦЕПЫ** для мини-трактора, мотоблока. Т. 8-905-344-47-35.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**736.Кольца колодезные** – 0,7; 1,0; 1,5. Доставка. Т.: 8-903-379-77-68, 36-26-23.

**775.Кăркка ашĕ.** Т. 8-903-346-50-49.

**779.Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 8-906-380-48-35, 8-927-667-46-05.

**784.Песок, гравмассу. Доставка.** Т. 89061337975.

ҪĂМĂЛ АТЛЕТИКА

# Ҫамрăк спортсменсем паттăрăн ятне асра тытаççĕ

*Ҫак кунсенче Ҫĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕн кермене çăмăл атлетсем пухăнчĕç. Унта Совет Союзĕн Геройĕне Николай Дудецкие асăнса хуласен турнирĕ иртрĕ.*



### Маттур салтакран полковник таран

Николай Дудецкий /1911-2000/ Воронеж облаçĕнчи Калач станицийĕнче çуралса ÿснĕ. Тулли мар вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн колхоза чăх-чĕп комбинатĕнче ĕçленĕ. 1933-1936 çулсенче Челябинск облаçĕнчи Магнитогорскра çар тивĕçне пурнăçланă, взвод командирĕн пулăшуçи пулнă. Служба вăхăчĕ вĕçленнĕ хыççăн маттур каччă унтах юлнă: малтан хула электростанцийĕнче, каярах металлурги комбинатĕнче вăй хунă. 1939 çулта каллех салтак аттине тăхăннă, финсемпе пулса иртнĕ çапăçусене хутшăннă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан çамрăк офицер Тĕп, Калинин, Украина тата Беларуç фрончĕсенче çапăçнă. 1944 çулта вăл стрелоксен 498-мĕш полкĕн командирĕ пулнă.

Çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн Н.Дудецкий «Совет Союзĕн Геройĕ» ята тивĕçнĕ. Çавăн пекех ăна Хĕрлĕ Ялав, Ленин, Александр Невский орденĕсемпе, «Ылтăн Çăлтăр» медальпе наградăланă. Вăрçă хыççăн та паттăр офицер хăйĕн пурнăçне çарпа çыхăнтарнă – 1948 çулта М.Фрунзе ячĕллĕ çар академийĕнчен вĕренсе тухнă. 1961 çултанпа вăл – запасри полковник. Тивĕçлĕ канăва тухсан Николай Митрофанович Чăваш Ене куçса килнĕ, 35 çул ытла Чăваш патшалăх ялхуçалăх институтĕнче преподавательте ĕçленĕ. Совет Союзĕн Паттăрĕ 2000 çулхи январĕн 10-мĕшĕнче вилнĕ, ăна Карачура масарĕнче пытарнă. Шупашкарта вăл пурăннă çурт çине Асăну хăми çакнă. Ăна сума суса пирĕн республикăра çулленех çăмăл атлетика ăмăртăвĕ йĕркелеççĕ.

### Пурĕ – 24 медаль

Хуласен турнирĕпе çăмăл атлетсен хĕллехи сезонĕ уçăлать. Йăлана кĕнĕ тупăшăва кăçал Чăваш Енри, Чĕмпĕр, Киров, Чулхула облаçĕсенчи, Тутар тата Мари республикисенчи 600 яхăн спортсмен хутшăнчĕ. 1998-2001 çулсенче çуралнă яшсемпе хĕрсем медальсен 52 комплекчĕшĕн вăй виçрĕç. Пĕрремĕш кунхине ăмăртусем хăвăрт утакансемпе тăршшĕне сикекенсем, тĕрлĕ дистанцие чупакансемпе çăнă ывăтакансем тупăшрĕç. Ăмăртура Шупашкарти Олимп резервĕсен училищин студенчĕсем уйрăмах маттур пулнине палăртмалла, вĕсем тĕрлĕ тупăшура малти вырăнсене йышăнчĕç. Акă хăвăрт утас енĕпе республика тата Раççей турнирĕсенче пĕрре мар çĕнтернĕ Паттăрьел хĕрĕ Наталья Никитина 3000 метрлă дистанцире 15-16 çулсенчи хĕрсен йышĕнче пьедесталăн чи çÿллĕ картлашки çине хăпарчĕ. Унăн юлташĕсем – Надежда Таланова, Александр Ижендеев, Евгений Федоров – чи сумлă наградăсем çĕнсе илчĕç.

Турнирăн иккĕмĕш кунĕнче йĕтре тĕртекенсемпе чăрмавсем урлă чупакансем старта тухрĕç. Олимп резервĕсен училищинче вĕренекенсем вырсарникун та лайăх кăтартусемпе палăрчĕç. Çĕнтерÿçĕсемпе призерсен йышне 200 метр чупнă Вадим Цыгановпа Артем Афанасьев, Мария Алексеевăпа Константин Карзаков /800 м/, Татьяна Егоровăпа Катерина Кадыкова /çăнă ывăтасси/, Сергей Морозов /çÿллĕшне сикесси/ тата ыттисем кĕчĕç. Пĕтĕмĕшле илсен, Чăваш Ен спортсменĕсем ăмăртура 24 медаль выляса илчĕç.

■ Андрей МИХАЙЛОВ

МĔНШĔН ÇАПЛА КАЛАТПĂР

# Ула куракран хыпар пултăр

Çар комиссариачĕ пĕр каччăна салтака кайма хут тыттарать. Çĕршывăн пулас сыхлавçине ыр сунса ял халăхĕ ăна ăсатма яланах йышлă пухăннă. Халĕ те салтак каччи хăйпе çывăх тăнă пĕлĕш-тантăшне ăсату каçне пыма чĕнсе çÿрет. Урамра хăйĕнчен чылай аслăскерне курсан унăн кăмăлне хуçас темест – ăсату каçне пыма чĕнет.

Çакскер, янтине хăнăхнăскер, килне çитет те арăмне: «Пĕлетĕн-и, Анаткасри Кольăна салтака илсе каяççĕ, çав ятпа ун патне çамрăксем пухăнаççĕ, урамра тĕл пулчĕ те мана та пыма чĕнчĕ», – тет.

– Намăс та мар-и сана, çулпа илсен вăл шăллу пулать вĕт. Сÿтĕлсе çÿренĕ ан пултăр. Ула куракран хыпар пултăр тенĕ пек пулса тухать капла, – тет мăшăрĕ.

Сăнанă-и эсир: калăпăр, хирĕçре пурăнакансем така пуснă, унччен те пулмасть таçтан муртан юн шăршине сиссе ула куракcем вĕçсе килме те ĕлкĕрнĕ. Кÿрши малтан ун пирки пĕлмен те. Авă ун çинчен ула куракcем вĕçсе килсе хыпар турĕç. Халĕ ĕнтĕ çакскер мĕнле те пулин сăлтав тупса хирĕççи патне каçатех, пĕлет-çке вăл: вылăх-чĕрлĕх пуснă самантра тутанмалли пулатех.

Хытах ĕçес килнĕрен кам та пулин хăйне пулăшма, çăмăл ĕç тума чĕнессе кĕтсе ĕштеленсе çÿрекен çын пирки халăхра çапла калама хăнăхнă.

Роман ЧЕПУНОВ.

# Театрсен çитес эрнери – декабрь, 15-21 – репертуарĕ

## К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ



**16.** «Вĕçсе иртеççĕ кайăксем» мелодрама.
**19.** «Чикагори кукаçин пурлăхĕ» камит.
**20.** «Мунча кунĕ» драма.
**21.** «Юратупа кавăн» камит.

**Спектакльсем 18.30 сехетре пуçланаççĕ.**

## Чăваш патшалăх пукане театрĕ



**18.** «Эпĕ халь телейлĕ». В.Элпи **/18.00/.**

# Юбилейсем

***Декабрь, 15***

◆ Чăваш чĕлхе пĕлĕвне /аслăлăх/ пуçарнă, «Султалăк кĕнекин» авторĕ **Николай Золотницкий** /Сĕнтĕрвăрри районĕ, Урхас Кушкă/ çуралнăранпа – **185 çул**.

◆ **95 çул** каялла Социализм Ĕçĕн Паттăрĕ, Ленин орденĕн кавалерĕ **Александра Петрова** /Елчĕк районĕ, Аслă Пăла Тимеш/ çуралнă.

***Декабрь, 16***

◆ **1994 çулта** ЧР Патшалăх Канашĕ **Чăваш Республикин Хисеплĕ ячĕсене** тата **Чăваш Енĕн Хисеп хутне** çирĕплетнĕ.

◆ СССР Писательсен союзĕн членĕ, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ **Микки Микули** /Николай Иванов/ **85 çулхи** юбилейне уявлать.

***Декабрь, 19***

◆ 1950-1963 çулсенче И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн ректорĕнче ĕçленĕ **Константин Евлампьев** çуралнăранпа – **110 çул**.

***Декабрь, 20***

◆ **85 çул** каялла РФ Çутĕç отличникĕ, **Борис Борлен** /Тихонов/ /Елчĕк районĕ, Кивĕ Арланкасси/ сăвăç-журналист çуралнă.

◆ Чăваш сăвăçи, СССР Писательсен союзĕн членĕ **Валентин Урташ** /1924-1973/ çуралнăранпа – **90 çул.**

***Декабрь, 21***

◆ РФ Композиторсен союзĕн членĕ, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ **Лариса Быренкова** /Шупашкар/ **55 çул** тултарать.

# Паллă кунсем

***Декабрь, 15***

■ **Хăйсен тивĕçĕсене пурнăçласа вилнĕ журналистсене асăнмалли кун.**

■ **Аввакум кунĕ.** Ачасене чирчĕртен сиплемелли кун, ĕлĕк пĕчĕккисене сыватмашкăн им-юм мелĕсемпе усă курнă. Раштав варринче юр нумай-тăк – çулла курăк вăйлă пулать. Маргарита, Афанасий, Борис, Владимир, Иван, Кирилл, Мария, Матвей, Николай, Сергей, Степан, Тамара хăйсен менелникне уявлаççĕ.

***Декабрь, 16***

■ **Иван кунĕ.** Çак кун нумай калаçма хушмаççĕ, унсăрăн сирĕн пирки элек сарăлас «хăрушлăх» пур. Килти «çÿп-çапа» урама кăлармалла мар. Хурăн йывăççине касма, тураттисене хуçма юрамасть: вилнĕ çынсем кÿренеççĕ. Менелник «хуçисем»: Аделаида, Алиса, Андрей, Гавриил, Георгий, Николай, Федор.

***Декабрь, 17***

■ **Ракета çарĕн кунĕ.**

■ **Варвари кунĕ.** Раштаври чи сивĕ кун, вăл темиçе куна тăсăлма пултарать. Çак кун ача кĕтекен хĕрарăмсен Турăран çăмăллăх ыйтмалла. Александр, Алексей, Василий, Геннадий, Дмитрий, Екатерина, Иван, Кира, Николай хăйсен менелникне паллă тăваççĕ.

***Декабрь, 18***

■ **Мигрантсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ. ЗАГС ĕçченĕн кунĕ.**

■ **Савва кунĕ.** Çак кун ĕçлеме хушмаççĕ, килте лаша пур пулсан вăрçăнма юрамасть. Уйăп юрласан – юр çăвасса, йĕпе-сапаллă çанталăк пуласса. Захар, Геннадий, Илья, Сергей ятлисемшĕн чи лайăх кун.

***Декабрь, 19***

■ **Чухăнсене пулăшмалли пĕтĕм тĕнчери кун.**

■ **Микула кунĕ.** Тĕрлĕ килĕшÿ тумалли ăнăçлă кун. Ĕлĕк çак кун çемье çавăрма хатĕрленекен хĕрпе каччă ашшĕ-амăшĕнчен пил ыйтнă. Йывăççене пас тытсан тепĕр çул тухăçлă çулталăк пулать. Менелник «хуçисем»: Максим, Николай.

***Декабрь, 20***

■ **РФ патшалăх тата наци хăрушсăрлăхĕн органĕсенче ĕçлекенсен кунĕ.** Пĕр шухăшлă çынсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ.

■ **Амвросий кунĕ.** Çак кун хĕвел пĕлĕт хыçне пытансан – юр çăвасса. Сивĕ-тĕк çуркунне йĕпе-сапаллă, çулла шăрăх пулĕ. Менелник Лев, Антон, Григорий, Иван, Игнатий, Михаил, Павел, Сергей паллă тăваççĕ.

***Декабрь, 21***

■ **Потап кунĕ.** Авал çак кун хĕрсем килтен тухма шикленнĕ, тĕрĕ усалтĕсел çыпăçасса ĕненнĕ, куç ÿкесрен хăранă. Çавăнпа пĕрле пухăнса алĕçĕпе аппаланнă: пир тĕртнĕ, çыхнă, тĕрленĕ. Менелникçĕсем: Анфисса, Кирилл.

# Çанталăк

**кăнтăрла çĕрле**

| | | | |
|---|---|---|---|
| 13.12 | 0 | - 1 | |
| 14.12 | 0 | 0 | |
| 15.12 | - 2 | - 6 | |
| 16.12 | - 5 | - 3 | |
| 17.12 | - 5 | - 3 | |
| 18.12 | - 4 | 0 | |
| 19.12 | + 2 | + 2 | |



чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР

Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи май уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăматкун"– 78353

Директор-тĕп редактор
В.В.ТУРКАЙ

С.П.СТЕПЧЕНКО – пĕрремĕш заместитель
М.М.АРЛАНОВ – коммерци директорĕ
РЕДКОЛЛЕГИ:
Г.А.МАКСИМОВ – тĕп редактор заместителĕ
Н.Г.СМИРНОВА – культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ
А.А.ТАРАСОВ – тĕп редактор заместителĕ
В.В.ТУРКАЙ – директор-тĕп редактор
Ф.П.ЧЕРНОВ – яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ

Дежурнăй редактор В.Н.БАГАДЕРОВА

Редакципе издатель адресĕ: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "Хыпар".

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор заместителĕ
56-04-17 – коммерци директорĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64

коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru

корр. пункчĕ:
Йĕпреç – /8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

Факс: (8352) 28-83-70
Электронлă почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ,13.
56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÿСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе"**, **"Ят-сум"**, **"Ĕç тата çын"**, **"Самана таппи"**, **"Компетентлă"** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 12.12.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 8599. Заказ 4817.

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăматкунпа вырсарникунсăр пуçне.